ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

28 (4390) №, 2014, утă, 10 (1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ХАВАСЛĂ КАНИКУЛ

## Юрататăп йăмăкпа шăллăма!



**Пĕрремĕш класс вĕренсе пĕтернĕ Артем Пашков ачасене çав тери юратать. Тăваттă тултарсан йăмăкне Эльăна та хăех пăхнă вăл. – Сăпкаран та хамах йăтса илеттĕм ăна. Апатне те хамах çитереттĕм. Йĕрмĕшместчĕ, – тет арçын ача хавассăн. Халĕ авă Рома шăллĕнчен куçне пачах вĕçертмест.**

– Эльăпа танлаштарсан Рома йăрăрах, ларма-тăма пĕлмест. Пур япалана та тытса кăна мар, çыртса та пăхасшăн. Акă пĕр кунхине сĕтел çинче выртакан кăлпассине хăех касса илесшĕн пулнă ахăртнех. Пĕчĕкскер шари кăшкăрса янипе тĕпеле чупса кайрăм. Алли юнланнине курсан хам та ĕсĕклеме тытăнтăм. Эля та вĕçтерсе çитрĕ, вăл та макăрма тапратрĕ. «Анне вăрçать халĕ пире-е-е!» – терĕ аран-аран çăварне уçса. Чăн та, ятларĕç. Ромăна пĕр çеккунт та куçран вĕçертме юраманнине ăнланса илтĕм. Аннерен каçару ыйтрăм. Çак инкек хыççăн шăллăма хамран уйăрмастăп. Апла пулин те ĕнер, пĕрле альбом çине ӳкернĕ хушăра пит-куçне фломастерпа сăрласа пĕтернĕ. Хăш вăхăтра? Хам та ăнланмастăп, – тет Артем кулкаласа.

Урамра юлташĕсемпе час-час уçăлса çӳреймест арçын ача. Апла пулин те пĕрре те пăшăрханмасть.

– Аннен ĕç питĕ нумай, çавăнпа ăна ача пăхса пулăшас тетĕп. Атте Ромăпа ларнă чухне аннепе пĕрле пахчана тухатпăр. Пахча-çимĕçе çум курăкран тасатма пулăшатпăр. Арбуз та пур пирĕн ана çинче. Вăл пиçессе чăтăмсăррăн кĕтетпĕр. Хамăр лартса çитĕнтернĕ çимĕçе ас тивме те питĕ кăмăллă, – тет Артем йăл-йăл кулса.

Халĕ вĕсен килĕнче икĕ кушак çури пур. Пĕри Артемăн, тепри Эльăн.

– Пĕчĕкскерсене Рома та юратать, анчах вăл тепĕр чухне вĕсене хăлхисенчен туртать. Лешсем шăп-шăпăрт выртаççĕ. Эля хăй кушакне тепĕр чухне тутăр çыхтарать, кофта тăхăнтарать. Минтер хурса çывăрма вырттарать. Çакă Царапкăна питĕ килĕшет пулас, йăшăл та тумасть-çкеха, – тет Артем.

Шкулшăн тунсăхланине пĕлтерчĕ арçын ача. Пушă вăхăтра вăл тăрăшсах кĕнеке вулать. Ара, класс ертӳçи Татьяна Николаева Иванова çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче кашни ачаран мĕн вуланине содержани ыйтатăп тенĕ-çке.

*Элиза ВАЛАНС.*

Йĕпреç районĕ,
Пучинке.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Тимлĕх кирлех!

АСĂРХАНĂР!

## Шывăн турачĕ çук

Çу кунĕсем çав тери хăвăрт иртеççĕ. Кашни хĕвелпе хĕртĕнсе, шыва кĕрсе юлма тăрăшать. Савăнăç парнелет пире ăшă та хĕвеллĕ çу. Анчах та пур чухне те-ши? Çук иккен. Шывра инкек курнă тĕслĕхсен шучĕ ытти çулхипе танлаштарсан кăçал та пĕчĕкех мар. Çавăнпа та пире савăнăç кăна мар, тепĕр чухне инкек те кӳме пултаракан шывпа асăрханулла пулмаллине тепĕр хутчен аса илтерни пĕрре те ытлашши пулас çук. Çакна уйрăмах ачасен асра тытмалла.



Кăçал та ачасем шывра инкек курнă тĕслĕх темиçе те пулчĕ. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан ытларах та. Çав пăтăрмахсенчен иккĕшĕнче вĕсен ашшĕ-амăшĕ айăплă - аслисем ачисем шыва кĕнĕ чухне урăх ĕçпе аппаланнă. Тепĕр тĕслĕхĕнче вара аслисенчен пĕри юнашарах пулнă, анчах ачана асăрхаман. Ачасен ушкăнĕ хăйсем тĕллĕн шыва кĕме кайнă. Пĕри путма тытăннă, ыттисем юлташĕ инкеке лекнине курсанах хăраса ӳкнĕ те пулăшу ыйтма васкаса чупнă, анчах вăл кая юлнă...

Шывра путса вилни - калама çук пысăк инкек. Çавăнпа та питех те асăрханулла пулмаллине нихăçан та манас марччĕ.

Шыв пирĕнтен кашнине савăнăç кăна парнелетĕр. Инкек куçа курăнса килмест. Çавăнпа та эсир кимĕпе ярăнатăр е шывра ишсе килентĕр - яланах асăрханулла та тимлĕ пулăр. Тусăмăрсем, пĕве е кӳлĕ, е юхан шыв хĕррине хăвăр тĕллĕн нихăçан та ан кайăр. Сирĕнпе пĕрле шывра лайăх ишекен аслă çын пулмаллине яланах асра тытăр! Ишме пĕлни вара (уйрăмах тĕрлĕ мелпе) питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Савăнăç çеç кӳтĕр пирĕнтен кашнине çу кунĕ! Çак правилăсене пăхăнсан инкек нихăçан та çумра сӳ ремĕ.

1. Шыва ятарласа уйăрнă вырăнсенче тата сывлăш температури 25 градус пулсан çеç кĕмелле. Шыв 22 градуса çити ăшăнса çитмелле.

2. Ишме пĕлмесен шала кĕме ан васкăр. Ун пек чухне инкек юнашарах çӳрет. Çăлавăçсем е аслисем пур вырăнсенче кăна шыва кĕме юрать. Вĕсем сире кирек хăш самантра та васкавлă пĕрремĕш пулăшу пама пултараççĕ.

3. Эсир ишме пĕлетĕр пулсан та тӳрех таран вырăна кĕме ан тăрăшăр. Шыв температури сивĕнсе пынă май шăнăр хутлатса лартма е тăна çухатасси те пулма пултарать. Чи малтанах шывра алла чиксе пăхăр. Шыв сивви ӳте пĕрикĕ минут хушшинче чĕнĕтме чарăнать тĕк - шыва кĕме юрать.

4. Пĕлмен вырăнсенче ан чăмăр, тĕрлĕ вăйă выляса шалалла ишсе ан кĕрĕр.

5. Пуç чирĕпе е тытамак тытнипе чирлекенсен шыва нихăçан та пĕччен кĕме юрамасть.

6. Тарланă хыççăн тӳрех ан чăмăр. Чи малтан сулхăна тăрса ӳт-пӳ сивĕнессе кĕтĕр. Унтан пĕр 30-40 сантиметр тарăнăшне кĕрĕр те алăсене, ӳт-пĕве шыв сапса уçăлтарăр. Вара тин шаларах кĕме юрать.

7. Хăвăра шăнтнă пек туятăр пулсан тӳрех çырана тухма тăрăшăр.

8. Çыран тепĕр енне ишсе каçма ан тăрăшăр. Ишсессĕн те, ывăннине туйсанах, çурăм çине выртса кăшт канса илĕр.

9. Аслисене ачасене яланах асăрхамалла, вĕсем хăйсем тĕллĕн çеç шыв хĕррине ан кайччăр! Шыв хĕрринче те ачăрсене пăхсах тăмалла, куçран вĕçертме юрамасть. Юлташăрсен пепкисене те пăхăр, ют çын ачи тесе ан уйăрса хăварăр.

10. Ачăрсем ятарлă ишмелли хатĕрсем çинче чăмпăлтатаççĕ пулсан та тимлĕхе, тархасшăн, ан çухатăр! Вĕсем çаврăнса ӳкме пултараççĕ.

11. Шыв савăнăç çеç мар, инкек те кӳме пултарнине яланах асăрхаттарăр, ачасем инкеке лекесрен сыхлăр.

Чи кирли, тусăмсем, яланах асăрханулла пулни. Çавăнпа та тимлĕхе ан çухатăр.

***Мария ТОЯБИНСКАЯ,***
***республикăн вăй-хала аталантаракан центрĕн тухтăрĕ.***

ÇАМРĂК КОРРЕСПОНДЕНТ

## Строитель ĕçĕ çăмăл мар

Манăн çуралнă ял – Кĕлкеш. Çак кунсенче эпир вĕрентекенпе стройка пыракан вырăнта экскурсире пултăмăр. Кунта çĕнĕ, икĕ хутлă, хăтлă çурт хăпартаççĕ. Ĕçлекенсем пире кăсăклантаракан ыйтусене кăмăллăн хуравларĕç, ăçта тата мĕн купалассине ăнлантарчĕç. Кунта ача сачĕ пулать иккен. Çурт стенисене кирпĕчрен купалаççĕ. Тăррине симĕс тĕслĕ тимĕрпе витĕç. Çак япаласене пĕтĕмпех çӳлелле пысăк кран çĕклесе парать. Ĕçлекенсем вара хăш япалине ăçтарах хумаллине кăтартса кăна тăраççĕ. Ĕç кал-кал пырать стройкăра. Пирĕн те мĕнпе те пулин пулăшас килчĕ.

«Манăн асатте кран машинипе ĕçленĕ. Эпĕ те ӳссен ун пекех маттур пуласшăн», – терĕ Ваçук.

«Тăрăшсан пулатăн. Илемлĕ те ăшă çуртсем хăпартнă çĕрте ĕçлес тесен сирĕн шкулта лайăх вĕренмелле. Унсăрăн кирпĕч, цемент, тимĕр, хăма, хăйăр виçине тĕрĕс пĕлеес çук», – терĕ вĕрентекен.

Çав вăхăтрах строительсен суранланмасăр ĕçлеме те пĕлмелле. Хута янă çурт пурăнакансене савăнтартăр тесен вара хĕвел хăш енчен ытларах хĕртнине, çил хăш енчен вĕрнине, шывĕ ăçтала юхнине тата ыттине те шута илмелле. Строитель ĕçĕ пĕрре те çăмăл мар иккен.

## Манăн юратнă чĕр чун

Пирĕн илемлĕ йытă пур. Вăл Тиша ятлă. Шурă, хĕрлĕ, сарă тĕслĕскер пирĕнпе выляма юрататать.

Пĕррехинче эпир аслисемпе шыва кĕме кайрăмăр. Тиша эпир шывра чăмпăлтатнине асăрхарĕ те çыран хĕрне чупса пырса шыва кĕчĕ. Мĕнле лайăх ишет вăл! Унтан хĕвел çине хĕртĕнме тухса выртрĕ. Киле кайнă чухне Тиша çул тăршшĕпех пирĕнпе выляса пычĕ. Ахăртнех, хăйне пĕрле илсе тухнăшăн савăннă вăл. Киле çитсен вара хăйĕн йăвине кĕрсе выртрĕ те çывăрса кайрĕ. Питĕ ывăннă пулмалла!

Тишăна эпĕ апат паратăп, пĕрле вылятăп. Вăл – шанчăклă юлташ. Ăна питĕ-питĕ юрататăп.

## Пирĕн кил-йыш

Эпир çемьере пиллĕкĕн пурăнатпăр. Аттепе анне, Кирилл пичче, Рома шăллăм тата эпĕ.

Аттене Эдуард Валериевич тесе чĕнеççĕ. Вăл хĕрĕх икĕ çулта. Нумай çул хушши шкул ачисене автобуспа турттарать. Анне Валентина Михайловна ятлă. Вăл вăтăр улттăра. Рома шăллăм çулталăкра кăна-ха. Çавăнпа анне унпа чылай вăхăт иртерет. Кирилл пичче вун виççĕре, кăçал улттăмĕш класс пĕтерчĕ. Эпĕ вара Аня ятлă, вунă çулта, тăваттăмĕш класа ăнăçлă вĕçлерĕм.

Пирĕн çемье питĕ туслă. Эпир ялан пĕр-пĕрне ăнланса, хисеплесе, пулăшса пурăнатпăр. Атте кунĕпех ĕçре. Анне те ахаль лармасть: кил-çурта тирпейлет, апат пĕçерет. Эпир пиччепе иккĕн аннене пулăшма яланах хатĕр. Кирилл урай шăлать, эпĕ чечек шăваратăп. Килти ĕçсене пурнăçланă хыççăн çемйипех урама уçăлма тухатпăр. Хĕллехи кунсенче пиччепе иксĕмĕр йĕлтĕрпе е конькипе ярăнатпăр. Аттепе анне тата пĕчĕк шăллăм пирĕн çине пăхса савăнаççĕ.

Эпĕ хамăн çемьене питĕ юрататăп. Вăл çулленех пысăкланса пырасса шанатăп.

***Анна ФИЛИППОВА.***

Вăрмар районĕ,
Кĕлкеш.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
А.ЛЕОНТЬЕВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ПЕТРОВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
2117 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 2515
Пичете утă уйăхĕн 9-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

Тантăш 3
28 №, 2014, утă, 10

# Çанталăк чуна савăнтарать



Эпир артист мар, артистран та кая мар.

Ай, кăмăлăм килчĕ – юрлатăп
Сăмахсăрах. Хăш чух – сăмахпа.
Çуран çӳреме юрататăп
Тусанлă тăван сукмакпа.

***(Петĕр Яккусен).***

Нумайăшĕ сивĕ хĕл кунĕсенче: «Эх, хăçан çулла çитетши?» – тесе мĕн чухлĕ ĕмĕтленмен-ши. Тĕлĕкре те шыва кĕнине, кăмпана кайнине, çырла çинине курнă ахăртнех.

Сисмерĕмĕр те, тем пекех кĕтнĕ каникул çитрĕ. Ăшă çанталăк чуна савăнтарать. Курткăсемпе атăсем çак уяр кунсенче манăçнă ĕнтĕ. Лара-тăра пĕлменскерсем урамран кĕме пĕлмеççĕ. Кашни кунĕ хаваслă иртет вĕсен.

Хăшĕ-пĕри эмел курăкĕ пухас ĕçре те сатур. Вĕсем улăхçаранра çӳреççĕ, вăрманта та пулса курăк пуçтараççĕ. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ валли тумтир туянма укçа ĕçлесе илеççĕ.



Манмастпăр сире, ветерансем.



Мечĕксĕр пурнăç çук!



Чирлерĕ-шим пукане?

## Тен, пулăп-ха çар çынни

Канаш районĕнчи Янкăлч шкулĕн вĕренекенĕ Павел Еремеевăн савăнăçĕ виçесĕр. Ара, вĕсен ушкăнĕ республикăри çамрăк армеецсен «Зарница» тата «Орленок» вăййисенче кадетсен хушшинче пĕрремĕш вырăна тухрĕ-çке.

– Маттурсем! Пирĕн çамрăксем чи хастарри пулнине тепĕр хутчен çирĕплетсе пачĕç, – тет Павел. – Хам вăл вăййа хутшăнман. Эпĕ апат пĕçерекенсене пулăшаканĕ пултăм. Хуран айне пăрахма вутă çурса патăм, шыв кӳрсе тăтăм. Çав вăхăтрах пĕрле вĕренекенсен пултарулăхĕпе паллашсах тăтăм. Кадет класĕнче ăс пухнишĕн савăнатăп эпĕ. Пирĕн шкултан вĕренсе тухнисенчен чылайăшĕ çар професссине суйласа илет. Унта та пултарулăхĕсемпе палăрса тăраççĕ. Педагогсем авă пире те вĕсенчен тĕслĕх илме сĕнеççĕ, – тет Павел.

Алла аттестат илсен арçын ача, тен, кам пĕлет, пурнăçне çарпа çыхăнтарĕ.

– Тĕрĕссипе, кун пирки кашни кунах шухăшлатăп. Çар тумĕ мана питĕ килĕшет, – тет мал ĕмĕтлĕ яш кулкаласа.



*Луиза ВАСИЛЬЕВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

# Вут та, шыв та вăйлă

**_Раççейри Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Енри тĕп управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх çулталăк пуçланнăранпа республикăра 538 хуçалăхра «хĕрлĕ автан» ташланă. Вут-çулăмра 55 çын пурнăçĕ татăлнă, 65 çын пушарта суранланнă. Çăлавçăсем 290 çынна çăлнă._**

**_Çанталăк шăрăх тăнине кура пурин те вут-кăварпа асăрханулла пуласчĕ. Шыва юратакансен те кун пирки манас марччĕ. «Шывăн турачĕ çук», – текен каларăша яланах асра тытасчĕ._**

## Тав çырăвĕ

Нумай пулмасть Раççейри Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Енри тĕп управленийĕн пуçлăхĕ Станислав Юрьевич Антонов генерал-майор патне Муркаш районĕнчи Хорнуй ялĕнчен тав çырăвĕ килнĕ.

«Пĕр кунхине пирĕн анне, вăрçă ветеранĕ Раиса Романовна Футлярова, вăрмана кăмпана тухса кайрĕ. Шел, çав кун киле таврăнмарĕ вăл. Ырă мара сиссе сирĕн ĕçченсенчен пулăшу ыйтрăмăр. Тав турра, хастар çăлавçăсем пирĕн аннене вăхăтра шыраса тупрĕç. Пысăк тав сире, пире ăнланса пулăшу панишĕн. Малашне те ĕçĕрсем ăнса пыччăр, сывлăхпа çӳрĕр», – тесе шăрçаланă çав çырура.

## Хастарсем

Çак кунсенче И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче хаваслă самант пулса иртрĕ. Физикăпа математика факультечĕн «Пушар хăрушсăрлăхĕ» уйрăмĕнчи 33 студент алла диплом илчĕ.

Хастарсене саламлама Станислав Юрьевич Антонов генерал-майор та çитрĕ.

– Кирек хăш вăхăтра та çынна пулăшма пултарасса шансах тăратпăр, хăвăра шанса панă ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласси те куçкĕретех, – терĕ вăл çамрăксене телей суннă май.

## Шыв пулăшăвĕ

Пурăннă тет çĕр çинче Шыв. Пĕррехинче унăн пуçĕнче Çут çанталăка çав тери хитрелетес шухăш çуралнă. Тепĕр кунне вара шыв юххи пулса инçе çула тухса кайнă. Кайсан-кайсан вăл сарăлса пынă, хăвартлăхне те ӳстернĕ. Сасартăк Хĕвел ăшшăн пăхнă та Шыв типсе ларнă. Унтан вăл Пăс пулса тăнă та çӳлелле вĕçсе хăпарнă.

– Хĕвелĕм, мĕншĕн эсĕ мана типĕтсе лартрăн? – тенĕ вăл пăшăрханса.

– Ан хуйхăр, акă эпĕ сана халăха ырă тума вĕрентĕп, – пулнă кĕске хурав.

– Манăн Çут çанталăка пулăшас килет. Ан тив, унăн хитрелĕхĕпе кашниех килентĕр.

– Хăв шухăшласа пăх-ха, ӳсен-тăран çумăрсăр типсе хăрма пултарать-çке.

– Чăнах, тĕрĕс калатăн. Тавах ырă сĕнӳшĕн.

Çак самантрах Пăс Çумăра çаврăннă. Пĕтĕм кăмăлтан Çĕр-аннемĕре шывпа савăнтарнă. Куç умĕнчех йывăç-курăк çĕнĕрен вăй илнĕ. Кайăксем те юрă шăрантарнă. Çынсемпе чĕр чунсем хавассăн кăшкăрнă:

– Тавах сана, Çумăр! Пире ăнланса пулăшу панишĕн!

Савăннă Çумăр каллех шыв юххине çаврăннă та малалла шавласа та кĕрлесе юхнă. Унăн ĕмĕчĕ каллех пысăк пулнă. Тинĕссемпе океансене тăварсенчен тасатас шухăш канăç паман ăна. Палăртнă вырăна çитсен:

– Сирĕнтен кăшт тăвар илме юратчĕ-ши? Халăх тăварсăр нушаланать. Сирĕн вара кунта ытлашшипех, – тенĕ лăпкăн çеç.

Тинĕс шухăша кайнă хыççăн:

– Юрать, санăн ыйтăвна пурнăçлатпăр. Тархасшăн, хăвна кирлĕ чухлĕ илсе кайма пултаратăн. Пирĕнтен чару çук, – тенĕ ăш пиллĕн.

– Тавах мана ăнланнăшăн.

Шыв пĕтĕм халăха тăварпа тивĕçтернĕ. Лешсем çав тери хĕпĕртенĕ. Акă Шыв Çут çанталăка:

– Эпĕ сана йăлтах хитрелетрĕм. Тинĕссемпе океансене тăвартан хăтăлма пулăшрăм, – тенĕ хăпартланса.



© Ксюша *КОШЕЛЕВА* (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) *ӳкерчĕкĕ.*

– Пысăк тав сана, Шыв! Анчах санран тепĕр пулăшу кирлĕ. Пысăк уçланкăри вăрмана вут хыпнă, çавна сӳнтерме май килмест-ши? – хурлăхлă сассипе калаçнă Çут çанталăк.

Çисĕмле хăвăртлăхпа васканă Шыв инкек сиксе тухнă вырăна. Темле йывăр пулсан та парăнтарнă вăл вут-çулăма. Вăрмантан тарнă чĕр чунсем тинех каялла таврăннă. Пурте Шыва тав тунă.

– Пире инкекре пăрахманшăн пысăк тав! Санăн малашне те çынна ырă ĕçпе савăнтармалла пултăр.

## Иртни куç умĕнчех...

Комсомольски районĕнчи Аслă Чурачăк ялĕнчи Антонина Никифоровна килти ĕçсене пуçтарса пĕтерсен канма пӳрте кĕчĕ. Акă çӳлĕк çинчи сăн ӳкерчĕксен альбомне асăрхарĕ те ăна илес тесе унталла утăмларĕ. Страницăсене уçнă май шухăша путрĕ. Хăй те сисмерĕ, куçĕ умне ачалăхĕ тухса тăчĕ.



Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Этнескер ялĕнче йышлă çемьере çуралнă вăл. Шкулта вĕреннĕ чухне математикăна чунтан юрататчĕ. Ахальтен мар, ара, çак предмета вĕрентекен Антонина Викторовна Викторова ачасене тарăн пĕлӳ парас тесе мĕн пур вăйне шеллеместчĕ.

– Ах, манăн та ӳссен ун пек хастар педагог пуласчĕ. Пысăк ĕмĕтĕм пурнăçа кĕрсен тем пекехчĕ, – тетчĕ Тоня педагогăн кашни сăмахне ăша хывнă май.

Аслăрах классенче вара хăй шухăшне юратнă учительницăна пĕлтерчĕ.

– Темле ĕнтĕ, манран аслă шкула вĕренме кĕресси пулайĕ-ши? Чун шикленет. Авă пĕр хĕр ача пĕрремĕш курс хыççăн экзаменсене тытайман. Кăларса янă ăна. Манăн та пулмасан – тăван тăрăха, атте-анне патне мĕнле пит-куçпа пырса кĕрес? – терĕ шухăша путса.

– Эсĕ математикăпа епле аван вĕреннине пĕлетĕп вĕт-ха, çавăнпа та пĕр иккĕленмесĕрех аслă шкула çул тыт. Ак кайран ӳлĕм ман сăмахсене аса илĕн, – хавхалантарчĕ ăна Антонина Викторовна.

Совхоз ĕçĕсене вĕçлесен, хатĕрленмесĕрех, Шупашкара çул тытрĕ Тоня. Ĕмĕтленни пурнăçланчĕ! Вăл студентка пулса тăчĕ!

Ушкăнра 25 ача. Пурте хаваслă та кăмăллă, анчах вĕсенчен пĕр йĕкĕт çеç ыттисемпе хутшăнмастчĕ. Ютшăнатчĕ. Пуçĕнчен нихăçан та беретне хывмастчĕ вăл. Урамра та, аудиторире те.

– Мĕншĕн беретне хывмасть-ха вăл? Сăлтавĕ пур ахăртнех, – терĕç студентсем пĕр-пĕрин хушшинче.

Вăхăт пĕчĕккĕн шурĕ. Акă пĕр кунхине лекцие шур сухаллă профессор кĕчĕ те çав йĕкĕт патне тарăхса таплаттарса утса пычĕ.

– Эс хăçан юлташусене, мана хисеплеме вĕренетĕн? – терĕ те пуçĕнчи беретне хывса илчĕ.

Каччăн пуçĕ йăлтах çуннине курсан профессор пĕр хĕрелсе, пĕр шуралса кайрĕ.

– Турă çырлахтăрах... Каçар, эп мĕн... Пĕлмен... Каçар, тархасшăн. Кай, вăй пĕтсе килчĕ...Çăвар типсе ларчĕ... Çан-çурăм пĕçерсе кайрĕ, – терĕ чĕтренсе тухакан сассипе.

Каччă пĕр сăмах та чĕнмерĕ, пуçне пĕксе çĕрелле пăхса ларчĕ. Студентсем те калаçайми пулчĕç.

– Апла хăтланмалла марччĕ ĕнтĕ педагогăн. Ку яшăн ахаль те чунĕ ыратса çӳрет пулĕ. Халĕ суран çине тăвар сапаканĕ те пулчĕ, – терĕ пĕри профессорăн хăтланкаларăшĕсене сивлесе.

Хайхи яш Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хуракассинчен пулнă-мĕн. Шкул çуннă чухне вăл та унта инкек тӳснĕ.

Тоня та çав тери хĕрхенчĕ йĕкĕте. Акă куçĕ умне Хуракасси шкулĕнче çунса вилнĕ ачасен амăшĕсем хӳхлесе макăрни куçĕ умне тухрĕ. Тĕпренчĕкĕсене çухатнă çемьесене пулăшу пултăр тесе пальтосем валеçсе панă. Çакă амăшĕсен чунĕсене пушшех ыраттарнă.

– Пире нимĕнле пальто та кирлĕ ма-а-а-ар! Вăл япаласемпе мĕн тумалла тет пирĕн?! Тупса парăр пире хамăр юратнă ачасене! – тесе хӳхленĕ ниçта кайса кĕреймесĕр.

...Аудиторире шăп. Хаваслă студентсем те тарăн шухăша путрĕç. Хăй мĕн тери пысăк йăнăш тунине ăнланса илнĕ профессор та лекци ирттерейменĕ.

Унтанпа шыв-шур чылай иртнĕ пулин те, çав саманта аса илсен чунĕ ыратса хĕсĕнет шкулта нумай çул ачасене математика предметне вĕрентнĕ Антонина Никифоровнăн.

– Вут-çулăм никама та шеллемест çав. Шел те... – терĕ вăл сăн ӳкерчĕксен альбомне каялла çӳлĕк çине хунă май.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

# Вĕсене кашни пĕлнĕ



Иртнĕ ĕмĕрĕн çитмĕлмĕш тата сакăр вуннăмĕш çулĕсенче çитĕннисемшĕн Виктор Попов ертсе пыракан ача-пăчасен Мускаври Пысăк хорĕн концерчĕсем чăннипех те кашнин чĕрине пырса тивнĕ. Сцена çинчен юрăсем шăрантаракан çамрăк артистсем хăйсен çепĕç сассисемпе куракансен чунĕсене хускатнă, тыткăнланă. Çулсем иртнĕ, çамрăк солистсем çитĕнсе çитнĕ. Хăшĕсем сценăпа сыв пуллашса пурнăçăн тĕрлĕ кĕтесне саланнă, теприсем кун-çула искусствăпах çыхăнтарнă.

## Акă мĕнлерех шăпа кĕтнĕ Виталик НИКОЛАЕВА...



Кăшт именчĕкрех те сăпайлă, лăпкă арçын ача совет тапхăрĕнчи чи паллă çамрăк юрăçсенчен пĕри пулса тăнă. Виталик Николаев Мускав облаçĕнчи Люберцы хулинче 1962 çулта çуралнă. Шкулта вĕреннĕ чухнех вăл музыкăна юратнă. Искусство енне туртăм пуррине вĕрентекенсем сиснĕ. Пĕррехинче Виталик юрлама пултарнине тĕрĕслеттерсе пăхас тĕллевпе вĕрентекен Мускава Виктор Попов хорне илсе кайнă. Ăна комисси тимлĕн итленĕ те арçын ачан пултарулăхĕ пуртан Виталике хора йышăннă. Занятисем Мускав хулинче хăйĕнче иртни те хавхалантарнă. Çакă ăна уйрăмах килĕшнĕ. Вăл вара занятисене кăмăлтан хаваспах çӳреме тытăннă.

Александра Пахмутова композиторпа тĕл пулни те арçын ачан шăпинче пысăк витĕм кӳнĕ – ăна солист пулма сĕннĕ. Виталик Николаев «Беловежская пуща», «Крейсер Аврора», «Марш юннатов» юрăсене калама çук илемлĕ шăрантарнă. Арçын ачан чапĕ ӳссех пынă. Вăл урăх çĕр-шывра та канцертпа пулса курнă. Апла пулин те çамрăк солист хорта тăватă çул кăна юрланă.

Сцена çинчен кайсан хăйĕн пурнăçне техникăпа тата электроникăпа çыхăнтарнă. Техникумран вĕренсе тухнă хыççăн çарта хĕсметре пулать. Унтан таврăнсан Мускаври чылай предприятире тăрăшать. Ачаран исскуствăпа туслашнăскер хăйне унсăр ăнланмасть – вăл мĕн пур ĕçе пăрахать. Халь вăл композитор. Кĕвĕ çырать, произведенисемпе итлекенсене савăнтарать.

## ...Ыттисене



Пур енĕпе те кăтартуллисенчен тепри вăл – **Дмитрий МАШНИН.**

Ача садне çӳренĕ чухнех унăн юрлас туртăм пулнине асăрхаççĕ. Тăхăр çул тултарсан вăл ытти юрăçпа пĕрле пĕрремĕш хут гастроле тухса каять. Сасă часах «хуçăлманран» вăл вун тăхăр çулчченех юрлать. Хорта ыттисенчен чи нумай вăхăт юрлакансенчен пĕри шутланать. Радио валли унăн чылай юррине çыртарнă. Халь вăл Канадăра пурăнать, музыка енĕпех ĕçлет.



**Дима ГОЛОВ** та хор солисчĕсем хушшинче чи паллисенчен пĕри пулнă. Çемье династийĕ пур тесен те йăнăш мар. Унăн усрава илнĕ Анна ятлă хĕр ача пулнă. Вăл та çак ача-пăча хорне хаваспах çӳренĕ.

## ... Сережа ПАРАМОНОВА

Арçын ача мĕн пĕчĕкренех артист пулма çуралнă тейĕн. Сасси калама çук хитре те янравлă пулнă унăн. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна СССРта питех те паллă ят çĕнсе илме пултарнă Италири çамрăк юрăçăпа Робертино Лореттипе танлаштарнă. Шел те, ют çĕр-шыв юрăçине чаплă малашлăх кĕтнĕ пулсан, Сережа Парамонов шăпи синкерлĕ килсе тухнă.

Сергей 1961 çулта Мускавра ахаль рабочисен çемйинче çуралнă. Арçын ача музыкăна юратнине кĕçех нумайăшĕ асăрхать. Аслашшĕпе урамра усăлса çӳренĕ вăхăтсенче вăл хăй пурăнакан тăрăхри кинемейсене «концертпа» савăнтарма тăрăшнă. Пионерлагерьте каннă чухне ятарласа тенĕ пек ăна валли аккордеон туянса параççĕ. Арçын ача тăваттăмĕш класра вĕренме тытăнсанах ăна асламăшĕ Виктор Попов хорне илсе каять. Ĕç ăнать. Ăна итлесе пăхаççĕ те арçын ачана хор занятийĕсене çӳреме ирĕк параççĕ. Ытти хăш-пĕр ача ашшĕ-амăшĕ çине тăнипе юрланă пулсан, Сережа вара – хăйĕн кăмăлĕпе тата чун туртăмĕпе. Хор занятийĕсенчен те килне тулли кăмăлпа, хаваслăхпа таврăннă. Сцена çине те тухма вăтанман вăл.

1972 çулта Сережа чăн-чăн çăлтăр пулать тесен те йăнăш мар. «Юрă-72» фестивальте вăл «Песенка крокодила Гены» шăрантарса чапа тухать. Çакăн хыççăн арçын ача чап авăрне кĕрсе ӳкет. Нумай концертпа тухса çӳрет, ытти пионерсемшĕн тĕслĕх шутланать.

Ытти çамрăк солистсенни пекех çитмĕлмĕш çулсен варринче Сережăн та сасси улшăнма тытăнать. Сасă улшăннă тапхăрта уйрăмах арçын ачасен юрлама юрамасть. Çапах та Сережа ниме пăхмасăрах солист пулса концертсене хутшăнма тăрăшнă. Мĕншĕн тесен çак туртăм уншăн вăйлăрах пулнă. Апла пулин те 1975 çулта çак карьерăна пăрахăçлама тивет.

Парамонов сценăпа сыв пуллашнине йывăррăн тӳссе ирттерет. Хăйне хорти пекех туять. Репетицисене, концертсене тăтăшах килсе çӳрет, вăл шăрантарнă юрăсене ыттисем юрланине кулянса та хумханса сăнать. Каярах музыка училищине вĕренме кĕрет, анчах унтан пĕлӳ илсе тухаймасть. Вокалпа инструмент ансамблĕсене çӳрет. Çапла майпа аслисен пурнăçĕпе пурăнма тытăнать.



Тăхăр вуннăмĕш çулсенче вăл питĕ нумай ĕçлет. Тĕрлĕ ансамбльте вылять, радиопередачăсене хутшăнать, концертсем йĕркелет, ача-пăча уявĕсенче куракансене савăнтарать, ресторансенче юрлать... Çаксем те пурте мар. Юлашки çулсенче хăйĕн унчченхи тусĕпе Игорь Матвиенкопа пĕрле ĕçлет.

Анчах пысăк музыка проекчĕсене пурнăçа кĕртме вăй-хал çитереймест. 1997 çулта Сергей хăйĕн иккĕмĕш арăмĕнчен уйрăлать. Ытлашшипех нумай ĕçлеме тата пурнăçри тĕрлĕ пăтăрмаха тӳссе ирттерме тӳр килнĕ çамрăка. Вăтăр икĕ çулта туберкулезпа чирлет. Иккĕмĕш ушкăнри инвалид вăтăр сакăр çула çитсен пурнăçран уйрăлать. Ӳпке тата чĕре чирĕсем ăна самаях хавшатнă пулнă иккен.



**Олег КАСЬЯНОВĂН** шăпи интереслĕ килсе тухнă. Вăл цирк артисчĕсен çемйинче çуралнă. Хора çӳреме тытăнсан час-часах Дима Головпа пĕрле юрлама тивнĕ. Çитĕнсен хăйĕн пурнăçне юрăç ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăнтарас темен – ашшĕ-амăшĕн çулĕпе кайма çирĕп тĕллев тытнă. Халь вăл паллă цирк артисчĕ.

*Кукăр-макăр çулпала, Унăн вĕçĕ пулмалла,*
*Эп пыратăп малалла. Тĕрĕс кăна утмалла.*



## Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă



1. Пĕвери «юрăç». 2. Пĕчĕк вăрман. 3. Тинĕсри капитансен уйрăмлăх паллийĕ. 4. Ăна-кăна тултарса хунă вырăн. 5. Вăл шакла пуçа кирлĕ мар. 6. Студентăн вĕренӳ çулĕ. 7. Çĕнĕ хапха çине тĕлĕнсе пăхакан выльăх. 8. Çулсеренех типсе пыракан тинĕс. 9. Çĕр-шывсем хушшинчи килĕшӳ.

## Пуç ватмăш



**Ăнлантарни:** çак тăваткăлсенче пилĕкшер пĕр пек сăмахсем вырнаçнă. Пуçламăш сас паллисем куç умĕнчех. Анчах та ăçта-ши ун вăрттăнлăхĕ?

*Кил енне чупать мулкач,*
*Амăшне çухатнă...*
*Кĕç анать хăрушă кас,*
*Тĕрĕс çул тупать-ши?*



## Шыракан – тупать



Çакăнти пичкесене васканипе пулас тахăшĕ арпаштарса лартса тухнă. Вĕсене хăйсен вырăнне лартсан вара ваттисен каларăшне вулама пулать.

## Унталла та кунталла



1. Çĕр çинчи пĕрремĕш космонавт. 2. Уçланкăри .. (юрăран). 3. Пушă. 4. Раççейĕн паллă киноартисчĕ. 5. Кĕлпук Мучи. 6. Кăнтăрти яштака йывăç. 7. Машинасене юсакан. 8. Пысăк «михĕ» çакса çӳрекен вĕçен кайăк. 9. «Кĕт мана, эп таврăнатăп» йĕркесен авторĕ. 10. Пăрça евĕр эмел. 11. Вăл хаçат страницинче тĕл пулать. 12. Мускаври «Динамо» командăри футболист. 13. Çаврăнса ӳкнĕ пăр катăкĕ. 14. Чăваш боксерĕ, Олимп чемпионĕ. 15. Ун çинче хоккейла выляççĕ. 16. Ăна предложени вĕçне лартаççĕ.

## Сăмах каçмăш-числоворд
## Хăйне евĕрлĕ кроссворд...



**2**

11
18
41
78

**3**

134
337
396
416
535
968

**4**

1435
1562
1783
1832
1875
3481
4367
4663
4667
6338
6964
7181
7531
8349
8395
8749
8835
8938
8941
9510

**5**

142641
251252
681252
907212

## Сăмах каçмăш



1. Ун айĕнче шăши вилмен. 2. Сӳпĕлти кайăк. 3. Вăл тăварпа пиçнĕ. 4. Тухман çын тухсан пулакан пулăм. 5. Ăна кахал сĕтел хушшинче чи малтан ярса тытать. 6. Ĕç тумтирĕ. 7. Унран аслă пулма хушман. 8. Кăмпа. 9. Пахча çимĕç. 10. Унпа чей ĕçеççĕ. 11. Килти мăр-мăр. 12. Йывăç. 13. Апат пĕçермелли хатĕр. 14. Çуркунне ирех вĕçсе килекен кайăк. 15. Шакла кавир. 16. ... Бульба.

## Туптарусем

Уйăх ячĕ чăвашла,
Систереп – хĕрарăм мар.
Халь пĕрле çеç çырмалла,
Сиксе тухĕ вут-кăвар.

* * *

Шăннă шыв пулатăп,
Чĕрнене сăрлатăп.
Пире çыхăнтар çеç,
Яка çул пулатăп.

* * *

Мансăр кăмака тăваймăн,
Сарăлса выртап уйра.
Иксĕмĕр кавар тусассăн,
Çĕрле тухăп сунара.

* * *

Никĕс манпала хываççĕ,
Талăк пайĕ те манра.
Пĕрлештер кăна хальхаççăн,
Эп çыравçă – чăвашла.

## Сăмах каçмăш



**Сылтăмалла:** 2. Талăк. 5. Тĕвесен ушкăнĕ. 8. Ăна нуша çитерет. 9. Пахча çимĕç. 12. Пуçлăхăн тенкелĕ. 13. Унпа чей ĕçеççĕ. 16. Вăрманти вĕçен кайăк. 17. Хăш-пĕр чухне кирлĕ çынна унпа кăнтăрла шырасан та тупаймастăн. 19. Телейлĕ вăхăт. 20. Те тăхăнмалли япала, те ларса канмалли вырăн.

**Аялалла:** 1. Уçлăха пĕр хут вĕçсе курнă карап. 3. Суту-илӳ вырăнĕ. 4. Наян. 6. Ят-шыв палли. 7. Лакăшти инке шыв хĕрне анать (туп.юм.). 10. Ăна хирĕç нимĕн те тăваймăн. 11. Вăл сурма тытăнсан тинке тухать. 14. Тухман çын тухсан яванакан пулăм. 15. Çĕр кавирĕ. 18. Вĕçен кайăк.

## Ши! кайрăм, пи! кайрăм,
## Хăваласа çитĕр-ши?



1. Ун çинче Емеля выртма юратнă. 2. Амăшĕ çине вĕрсе кашкăр çăварне çакланнăскер. 3. Ӳнерçĕн ĕçĕ. 4. Кавказ тăрăхĕнчи çĕр-шыв. 5. Ялти сивĕтмĕш. 6. Ĕлĕк-авал ун çине çырнă. 7. Чăваш апачĕ. 8. Катка-пичке тăванĕ. 9. Ют пахчана килĕштерекен выльăх. 10. Хулари транспорт. 11. Тӳпери «хурçă» машина. 12. Ун хушшине тăрсан туртмах тивет. 13. Утă-улăм вырăнĕ. 14. Республикăри район. 15. Çар техники. 16. Вăл ĕнсе хыçĕнчех çӳрет. 17. Пушар вышки... 18. ... кĕперĕ. 19. Кăмака пайĕ. 20. Кăнтăрти çимĕç. 21. Пулас генерал. 22. Шултăра мулкач. 23. Вĕçен кайăк. 24. Хĕрĕме калам, ...ĕм илттĕр.

***Николай КРАСНОВ***
***(ЧР, Йĕпреç районĕ) ĕçĕсем.***

● "ТĂВАН ЯЛĂМ ÇАПЛА ПУÇЛАННĂ" КОНКУРС

# Хăйне евĕр илемлĕх пур

Урикасси ялĕ Шупашкартан 121 çухрăмра, Хĕрлĕ Чутайран 29, чукун çул станцийĕнчен 64 çухрăмра Элĕк районĕпе юнашар вырнаçнă. Юнашарах Выла юхан шыв юхса выртать. Тăван ял пирки мана аттепе Роза аппа çак халапсене каласа пачĕç.

**Атте халапĕ:**

– Тахçан ĕлĕк-авал тĕне кĕмен чăвашсем çеçен хирсенче хăйсен выльăх-чĕрлĕхне пăхса çӳренĕ. Сĕтеклĕ симĕс курăк шыраса уй-хир урлă вырăнтан вырăна куçнă. Пĕр çĕрте эрне тăрса, выльăх тирĕсенчен çĕленĕ ӳплесем лартса пурăннă. Ламран-лама куçса пыракан чăваш йăли-йĕркине пăхăннă. Вĕсемшĕн ĕнесем ылтăн вырăнĕнче пулнă, лашасене турă вырăнне хунă, сурăхсемпе качакасем тарçă вырăнĕнче шутланнă.

Пирĕн ял вырăнне те ешĕл çарансем шыраса çӳрекен чăвашсен çемйи çитсе чарăннă. Вĕсен виçĕ ывăл пулнă. Аслă ывăлĕ Шураç ятлă, вăталăххи Упи, кĕçĕнни Ури ятлă пулнă. Çеçен хир сывлăшĕпе сывласа, ĕçпе пиçĕхсе çитĕннĕ çамрăксен ашшĕ-амăшĕн хӳттинчен уйрăлса тухмалли вăхăт та çитнĕ. Вĕсем пурăннă ял питех те пысăк пулнă, çавăнпа ашшĕ ывăлĕсене уйрăм хăйсен ялĕсене тума кăларса янă. Ашшĕ Шураçа лаша панă, Упине ĕне парнеленĕ, Урине – сурăхпа качакине. Вăл вăхăтра урама кас тесе каланă. Шураç утрĕ-утрĕ те чарăнса тăчĕ, лаши канма выртрĕ. Лаша йăваннă çĕрте Шураç кил-çурт çавăрать, çапла Шураç ялĕ пуçланса кайнă.

**Роза аппа (Роза Анатольевна) каласа пани:**

– Пĕр карчăкпа старик пурăннă, тет. Вĕсен ывăлĕсене уйăрса кăлармалла пулнă. Асли Шураç ятлă пулнă, ăна ашшĕ лаша панă, вăл çулпа лашапа пынă. Лешĕ йăванма пуçланă. Унтан ура çине сиксе тăнă. «Манăн çакăнта кил-çурт çавăрмалла пуль?» – тесе шухăшланă Шураç. Вара çак ывăл ячĕллĕ ял пуçланса кайнă. Вăталăххине, Упие, ĕне панă. Выльăх курăк çисе пынă. Çисе тăрансан чарăнса тăнă. Упи вара: «Манăн çакăнта кил-çурт çавăрас пуль?» – тесе шухăшланă. Çапла майпа Упукушкăнь ялĕ пуçăннă. Ури ятлă ачи качакасемпе тата сурăхпа пынă. Вĕсем те çисе тăраннă та чарăнса тăнă. Ури вара: «Манăн çакăнта кил-çурт çавăрса пурăнма пуçлас», – тенĕ. Çапла майпа Урикасси ялĕ никĕсленнĕ.

Ялтан инçех мар Выла шывĕ юхса иртет. Ял тавра Кирпĕч варĕ пур, тахçан кунта Урикасси çыннисем кирпĕч çапнă. Кунтах Тяпан кĕперри тенĕ вырăн та пур, Микита варĕпе Сивĕ çăл варĕ ял тавра вырнаçнă.

Урикассинче виçĕ урам: Вăта çут, Варринчи урам тата Хыçалти çут. Вĕсем Николаев, Чапаев, Пушкин ячĕллĕ урамсене пайланнă.

Халĕ кунта 67 çурт, вĕсенчен вăтăрăшĕ дача вырăнĕнче кăна юлнă темелле. Хĕл кунĕсенче çав çуртсенче никамах та пурăнмасть. Çулла вара тĕрлĕ пахча çимĕç çитĕнтерме килеççĕ е канмалли кунсене çитеççĕ. Ялта 118 çын прописккăра тăрать. Анчах вĕсенчен хĕрĕх виççĕшĕ урăх вырăнта пурăнать. Ялти чи ватă та хисеплĕ çынсенчен пĕри – 95 çулхи Александра Никифоровна Алексеева. Пирĕн ялăн хăйне евĕр илемлĕхĕ пур: уçă сывлăш, тĕрлĕ вĕçен кайăк юрри, хитре çарансем çинчи илемлĕ чечексем, ĕçчен ял халăхĕ...

Чи малтанах ку ял пирки 1795 çулта Арайкосы тесе палăртнă, кунта чăвашсем пурăннă, вĕсем патшалăх хресченĕсем шутланнă, кашни ар çыннăн патшалăха укçан тата çĕршĕн оброк тӳлемелле пулнă.

Ялта 26 килте 138 çын пурăннă (75 арçынпа 63 хĕрарăм). 1835 çулта хресченсем удел хресченĕсем пулса тăраççĕ, император çемйине тытса тăма хушма укçа тӳлемелле тăваççĕ. Ялти халăх тыр-пул туса илнĕ, выльăх-чĕрлĕх усранă, унсăр пуçне çăм атă йăваланă, тимĕрçĕсем те пулнă, атăпушмак çĕленĕ, сĕтел-пукан ăсталанă. Çăм та таптарнă, кам мĕн пултарнă, çав ĕçпе аппаланнă. 1897 çулта ялта çăкăр упрамалли кĕлет пулнă, виçĕ çил арманĕ, çăм таптармалли ампар, унсăр пуçне кунта кирпĕч туса кăлармалли вырăн та пулнă. Çил арманĕсен хуçисем – Дмитрий Ефимов, Иван Николаев тата Дмитрий Федоров. Ял халăхĕ 1911 çулта 117 лаша, 210 ĕне тата 523 сысна-сурăх усранă.

Пĕрремĕш тĕнче вăрçине Урикассисем те хутшăннă. Саккăрăшĕ тыткăна лексе киле 1919 çулта çеç таврăнма пултарнă. Граждан вăрçине те виçĕ çын хутшăннă. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинчен Урикассинчи 49 çын киле таврăнайман. Григорий Осипович Данилов Мухтав орденĕ илме тивĕçлĕ пулнă, Никодим Никитич Алексеев санинструктор пулса çапăçнă, вăл та чылай медаль илме тивĕçнĕ, Василий Трофимович Федоров та Мухтав орденĕпе ытти наградăна тивĕç пулнă. Ял халăхĕ ытти мĕн пур совет халăхĕпе тан фронта пулăшнă, чăлха-алсиш çыхнă, апат-çимĕçпе пулăшнă. Ялта эвакуаципе килнĕ ултă çемье пурăннă.

1931 çулта ял халăхĕ кӳршĕри Упукушкăнь ялĕпе пĕрле «Жнейка» ятлă колхоз йĕркеленĕ, унтан вĕсем юнашар ялти колхозпа пĕрлешсе «Маяк» хуçалăх туса хураççĕ. Хальхи вăхăтра колхоз панкрута тухнă. Ял халăхĕ аякри хуласене ĕçлеме çӳрет, выльăх-чĕрлĕх усрать.

Кунта çуралса ӳснĕ паллăрах çынсем: Геннадий Петрович Ухлинов – ял хуçалăх ĕçченĕ, унăн ывăлĕ Валериан Ухлинов – Шалти ĕçсен министерствин офицерĕ. Вăл обществăлла йĕркене тивĕçлипе сыхланăшăн та ятарлă медале тивĕçнĕ. Геннадий Руссков вăрманçăн, Михаил Русссков колхозникĕн кăкăрĕсене «Ĕçри хастарлăхшăн» медальсем илемлетеççĕ. Геннадий Русссков механизатор та ĕçри çитĕнӳсемшĕн ятарлă палла темиçе хутчен те тивĕçнĕ. Николай Русссков милиционера медальпе пĕрре çеç мар наградăланă.

Пирĕн ялта юрăçă та çуралнă. Алина Славиковна Максимова юрăпа ташă ансамблĕнче тăрăшать, халăха хăйĕн хитре сассипе тыткăнлать.

Ял пуласлăхĕ пур-ши? Ман шухăшпа ялсене пĕтме памаççех, вырăнти халăх тăрăшсан, патшалăх малашне те пулăшсан пирĕн ялсем çĕр çинчен çухалмаççех!

*Вера УСТИНОВА.*

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Штанаш шкулĕ.



## «Тăван ялăм çапла пуçланнă»

***Кăçал çĕр-шывра Культура çулталăкĕ иртет. Эпир те, «Тантăш» хаçат тусĕсем тата çамрăк тавра пĕлӳçĕсем, ăна паллă тăвас тетпĕр. Çав тĕллевпе «Чăваш Республикинчи учительсен ассоциацийĕ» çумĕнчи чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенсен секцийĕ (ертӳçи – Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ Г.Л.Никифоров) редакципе пĕрле «Тăван ялăм çапла пуçланнă» конкурс йĕркелеме йышăнчĕ. Кунта эпир Чăваш Енри кашни ял мĕнле пуçланса кайни пирки сăмах хускатасшăн. Çак ĕçре эсир, вулакансем, пулăшни питĕ вырăнлă. Хăвăрăн тăван ял мĕнле йĕркеленни пирки мĕн пĕлнине çырса пĕлтерсен эпир сире чĕререн тав тунă пулăттăмăр.***

Хамăрăн кăк тымара, ял кун-çулне тĕплĕн пĕлмесĕр малашлăха утма хĕн. Ял историне пĕлмелле кăна мар, вăл манăçа ан тухтăр тесе хут çине çырса хумалла. Çавăнпа та ĕнтĕ шырав ĕçне пуçăнар пуль.

Ăна çырас ĕçре пулăшас шутпа 10 ыйту хатĕрлерĕмĕр. Вĕсене хуравлани кăна çителĕксĕр. Ял кун-çулне май килнĕ таран тулли тата çыхăнтарса çырма тăрăшăр.

Сирĕн ĕçĕрсенчи ял халапĕсем тĕрлĕрен пулма пултарĕç. Хăшĕ-пĕри истори чăнлăхĕсемпе килĕшсе те тăмĕ. Апла пулин те иртнĕ пурнăçа лайăх пĕлекен ватă çынсем мĕн каланине ним улăштармасăр çырса илĕр. Ял пуçламăшне каласа паракан хушаматне, ятне, ашшĕ ятне, хăçан тата хăш ялта çуралнине çырма ан манăр.

**«Тăван ялăм çапла пуçланнă»** конкурс ĕçĕсене раштавăн 1-мĕшĕнче пĕтĕмлетĕпĕр. Пахалăхлă хайлавсен авторĕсене парнесемпе чыслăпăр.

«Тăван ялăм çапла пуçланнă» ĕçе çырма пулăшакан ыйтусем:

1. Ял ячĕ: чăвашла, вырăсла, чиркӳ пулнă пулсассăн чиркӳ ячĕпе панă ят. Ятне хăвăр ялтисем, кӳршĕсем епле калаççĕ?
2. Ят пĕлтерĕшĕ.
3. Ял пуçланса кайни çинчен калакан халап. Вĕсем темиçе те пулма пултараççĕ. Вĕсене те çырăр.
4. Пуçаракан çыннăн е йăхăн ячĕ.
5. Ялăн малтанхи вырăнĕ (Кивçурт вырăнĕ) ăçта тата мĕнлерех пулнă?
6. Ялăн хальхи вырăнĕ мĕнле?
7. Ял миçе ĕмĕр каялла пуçланнă?
8. Сирĕн ентешсем çĕр-шыв историйĕнче палăрман-и?
9. Ял çумĕнче истори палăкĕсем çук-и?
10. Ял çĕнелсе, улшăнса пырать-и?
11. Унăн пуласлăхĕ, малашлăхĕ пур-и?

**Хуравсене «Тантăш» хаçат редакцине çак адреспа ярса парăр:**

428019, Шупашкар, Иван Яковлев проспекчĕ, 13. 7 хут е редакцин электрон адресĕ çине – **tantas@list.ru**

**Хаклă тантăшăмăрсем, паянхи номерте «Тантăш» хаçат сире «Чăваш кĕнеки. Пултаруллă çамрăксем» конкурс çĕнтерÿçисен – Элина Ивановăн (Елчĕк районĕ, Кĕçĕн Таяпа; «Çемьен чи лайăх тусĕ – кĕнеке» темăпа çырнă чи лайăх эссе) тата Александр Васильевăн (Патăрьел районĕ, Нăрваш Шăхаль; «Интереслĕ кĕнеке» темăпа çырнă чи лайăх сочинени е калав) – ĕçĕсемпе паллашма сĕнет. Ăмăртăва хутшăннă ытти сочинени-юмах та кун çути курсах пырĕ юратнă кăларăм страницисенче.**

ПУРНĂÇ ТАТА ЛИТЕРАТУРА

# Пурте – çын, пурне те юратмалла!



Чылай ача кĕнеке вулама юратмасть. Апла пулсан та эпĕ чăваш çыравçисен хайлавĕсене кăмăллатăп. Нумаях пулмасть Иван Лисаевăн «Чире парăнма çуралман» калавне вуласа тухрăм. Вăл мана пĕрремĕш йĕркеренех тыткăнларĕ. Тĕп сăнар, Витя Кулешов, йĕркесерен килĕшсе те килĕшсе пычĕ. Мĕнпе асра юлчĕ-ха ку сăнар?

Витя – чирлĕ ача, анчах та вăл эпĕ чирлĕ тесе найкăшмасть, сывă тантăшĕсемпе танах малалла вĕренме ăнтăлать. Мĕнле йывăр пулсан та килĕнчен костыльсемпе, пĕр сехет малтан, тухса пуринпе пĕрле çитет шкула.

Витя – питĕ тăрăшуллă ача. Вăл хăйĕн чирне çĕнтерес тесе врач çырса панă физкультура хусканăвĕсене пурне те пурнăçлать. Кашни кун хăйĕн ĕмĕчĕ патне, костыльсĕр утас тесе, малалла талпăнать. Эпĕ çапла шутлатăп: Витя питĕ ырă кăмăллă. Вăл никампа та вăрçăнмасть, çапăçмасть, лайăх çынсен сăмахĕсене итлет. Ун тавра та ырă çынсем кăна: амăшĕ, ăна пăхса тăракан тухтăр, пĕрле вĕренекен юлташĕсем, студентсем...

Витя – питĕ пултаруллă вĕренекен. Вăл йĕлтĕрпе те чупма хăнăхать, шахмат вăййине килĕштерет, спорт разрядне тултарать. Ури тĕрекне вăйлатас тĕллевпе арçын ача ялти тимĕрçĕ лаççинче ĕçлени те тĕлĕнтерчĕ мана. Мĕн тĕрлĕ паттăрлăх! Ури тем пек ыратсан та кире пуканĕ йăтса иккĕмĕш вырăна тухать, район чысне хÿтĕлет.

Эпĕ Витьăран çав тери тĕлĕнетĕп те, унпа мухтанатăп та: мĕн чухлĕ чăтăмлăх, тÿсĕмлĕх, ăшпиллĕх пĕтĕçсе тăрать çак пĕр çынра! Юлташĕсем тĕрек парса тăнипе ырра ĕненни Витьăна усал чире тĕппипех çĕнтерме пулăшаççĕ.

Эпĕ те Витя пек тÿсĕмлĕ пулма тăрăшатăп. Сыватайми чирлĕ-и, чĕлхесĕр-и, суккăр-и – пурте çын, пурте тăван! Вĕсене пурне те юратмалла, хисеплемелле, упрамалла, мĕншĕн тесен çĕр çине килнĕ пĕр этем те ыран хăйĕнпе мĕн пуласси пĕлмест.

Иван Лисаев хайлавĕнчи сăнар мана пурнăçри йывăрлăхсене çĕнтерме, ырă туссем тупма, аслисене итлеме, пулăшма, малалла ăнтăлма вĕрентрĕ. Юлашкинчен çакна калас килет: чăн-чăн Çын пулас тесен И.Лисаевăн «Чире парăнма çуралман» калавне вулăр.

***Александр ВАСИЛЬЕВ.***

Патăрьел районĕ,
Нăрваш Шăхаль.

ШУХĂШ

# Ун чухне манран телейлĕ ача та çукчĕ...



Кĕнеке ялан пирĕн пурнăçра тĕп вырăн йышăнать. Технологи ĕмĕрĕнче те кĕнекесĕр пурăнма май çук. Кăсăклă кĕнекене шĕкĕлчеме пуçласан алран ямасăр, сывламасăр тенĕ пек вуласа тухатăн. Компьютер, планшет, ăслăлăхри тата ытти çитĕнÿ аякра тăтăр. Вĕсем часах йăлăхтараççĕ, хайлавпа паллашас туртăм та питĕ хăвăрт сĕвĕрĕлет вара. Экран çине тимлесе пăхса ларни те куçа часах ывăнтарать.

Пирĕн çемьере пурте кĕнекепе туслă. Анне – кĕнекепе чи малтан паллашаканĕ. Кăсăклă произведение вуласа тухсан ыттисене те яланах унпа паллашма хистет. Нумай чухне ун тăрăх калаçу ирттерме пултарать. Ун хыççăн темле вулас килмен кĕнекене те алла тытас килетех. Малтанхи икĕ-виçĕ страницине паллашсан унран уйрăлас та килмест.

Кĕнеке вулакан нихăçан та усал ĕç тума, вăхăта ахаль ирттерме пултараймасть. Маншăн вара кĕнеке – пĕлÿ çăл куçĕ. Сĕтел çинчен тĕрлĕрен энциклопеди, словарь, справочник кайма пĕлмест. Киле панă ĕçсене пурнăçлама, çĕнĕ информацие тупса палăртма яланах кĕнекене усă куратăп. Хальхи вăхăтра Чăваш кĕнеке издательстви кăларакан кĕнекесем пысăк пахалăхлă. Унсăр пуçне вĕсене килĕшÿллĕ илемлетме тăрăшаççĕ.

Вулакан яланах çĕннине пĕлсе тăрать, çитĕнÿсем патне кармашать. Эпĕ библиотекăна виçĕ-тăватă çулта чухнех çÿреме пуçланă. Анне университетра куçăмсăр майпа вĕреннĕ, унăн питĕ нумай литературăпа паллашмалла пулнă. Мана вара вулавăшра пĕрле илсе кайнă. Малтан кĕнекене ÿкерчĕкне пăхса суйлаттăм. Илемлĕ ÿкерчĕклисене аттепе аннерен вуласа пама ыйтаттăм. Каярахпа аслă пичче вуланине итлесе ларма килĕшетчĕ. Вĕсем пушă мар чухне те уçкаласа ларattăм кĕнеке страницисене. Çакăн хыççăн пилĕк çулта хамах вулама вĕрентĕм. Ун чухне манран телейлĕ çын та çукчĕ. Никамран ыйтмасăрах кĕнекере мĕн çырнине тĕшмĕртме пуçларăм-çке! Анчах хăш-пĕр сăмахсен пĕлтерĕшне ăнланмастăмччĕ, пулăшу ыйтма тиветчĕ.

Халĕ вара вуламасăр пĕр самант та тăма пултараймастăп. Кĕнеке вуламан кун темĕн çитмест пек туйăнать. Аттепе анне те вулама юратнăран пирĕн килти библиотека та пуян. Çывăх çыннăмсем чылай чухне хăйсене килĕшекен е пирĕн кăмăла каякан кĕнекесене лавккаран туяннаççĕ. Эпĕ те ытларах чухне туссене кĕнеке парнелеме тăрăшатăп. Унран чаплăрах, сумлăрах, чуна çывăх парне урăх мĕн пултăр-ха? Вăл нумай çул упранать.

«Кĕнекесĕр чăн-чăн пĕлÿ çук», – тенĕ пĕр ăсчах. Çак сăмахсемпе эпĕ пĕтĕмпех килĕшетĕп. Пĕрре куçпа курни темиçе хут хăлхапа илтнинчен усăллăрах. Кĕнеке вăл – çывăх юлташ та. Кичем вăхăтра вулама пуçласан мĕнпур салхулăх сирĕлет, кирлĕ мар шухăшсем сĕвĕрлеççĕ, геройсен шăпи ытларах кăсăклантарма пуçлать.

Çемьери ырă йăла-йĕркесене тытса пыма та пире кĕнеке пулăшать. Атте-анне пире воспитани пама кĕнекерен вĕренет тесен те йăнăш пулмĕ. Анне пурнăçа ытарлă сăмахсем урлă курма-ăнланма хăнăхтарать. Ятлас вырăнне произведенири пĕр тĕслĕхе илсе парать, вăл е ку ларутăрура пирĕн хамăра мĕнле тытмаллине вĕрентет вăл.

Кĕнекепе ачаранах туслаштарни ахаль пулмарĕ тесе шутлатăп. Эпĕ ытларах поэзипе кăсăкланма пуçларăм, сăвăсем çырма тытăнтăм. «Тантăш» хаçатра малтанхи сăввăм пичетленсен савăнăçăн чикки те çукчĕ-тĕр!.. Миçе хут вуласа тухрăм ăна... Аттепе аннене кăтартрăм. Савăнăçăма вĕсемпе пĕрле пайларăм. Юратнă çыннăмсем малашне те çитĕнÿсем тума пиллерĕç. Сăввăмсене чи малтан хаклаканĕсем те вĕсемех. Тăрăшни сая каймарĕ – кăçал Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендине тивĕçрĕм. Район шайĕнче иртнĕ «Литературная Чувашия – 2012» конкурсра хамăн ÿсĕмре çĕнтертĕм. Çакăншăн та аттепе аннене тав тăватăп. Кĕнекепе туслаштарни харама каймарĕ, вĕсем акнă вăрлăх паха çимĕç пачĕ тесе калама пулать. Чи хаклă çыннăмсем тăрăшнипе-тимленипех эпĕ пурнăç çине урăхларах куçпа пăхма пуçларăм, ыррипе усаллине уйăрма вĕрентĕм.

Çулсем, ĕмĕрсем иртĕç, анчах çынсенче кĕнеке вулас туртăм нихăçан та чакмĕ. Мĕншĕн тетĕр-и? Мĕншĕн тесессĕн кĕнеке вăл – чунлă. Хальхи вăхăтра вара чылай чухне чунсăр япаласен тыткăнне лекнĕ эпир. Этемлĕх çак сереперен тухасса чĕререн шанатăп.

***Элина ИВАНОВА.***

Елчĕк районĕ,
Кĕçĕн Таяпа.

КĂСĂКЛĂ

# Словарьсем те интереслĕ

Библиотекăра мĕн тĕрлĕ кĕнеке кăна çук-ши! Пĕринчен тепри хăйне алла тытса пăхма илĕртет. Пĕррехинче вĕрентекен пирĕнпе «Ăнлан мана» вăйă ирттерчĕ. Ыйтăвĕсем питĕ çăмăл, анчах эпир пур пĕрех пурин çине те хурав тупаймарăмăр.

Часах манăн алла Н.Е. Наумовăн «Халăх çÿпçинчен» ятлă кĕнеки лекрĕ. Вăл этнографи ăнлавĕсен пуххи пулчĕ, кĕнекере чăваш халăх пурнăçне истори енчен туллин çырса кăтартнă. Автор словарь-справочникре сăмахсен пĕлтерĕшне чăвашла-вырăсла çырса панă, çавăнпа халиччен илтмен сăмахсен çинчен вуласа пĕлме интереслĕ пулчĕ. Акă хăшне-пĕрне кăна асăнса хăварам: капак, хайман, лăпă, кăрăш тата ытти те.

Кĕнекере Никифор Егорович иллюстрацийĕсемпе усă курнă. Эпир курман-илтмен япаласемпе паллашма пултарнăран кĕнеке пушшех те паха. Словарьпе паллашнă май чăваш халăх чĕлхи çав тери пуян текен шухăшпа килĕшме пулать, мĕншĕн тесен кунта вун тăхăр пай кĕнĕ. Кашни пайĕ тĕрлĕ япала, пулăм пирки каласа кăтартать.

Н.Е. Наумов кăларнă словарь-справочник пирĕншĕн питĕ усăллă кĕнеке тесе шутлатăп, унпа урокра та усă курма пулать. Ачасемпе сăмах вăййисене вылянă чухне те тавра курăма, ăс-хакăла аталантаракан кĕнекесенчен пĕри пулма тивĕç вăл. Çавăнпа интереслĕ те словарь.

***Мария ПАВЛОВА.***

Вăрмар районĕ,
Пысăк Енккасси.

Луиза ВАСИЛЬЕВА калавĕсем

# Каçару ыйтăп хĕвелтен

Урама тухас килмест. Пăчă унта мунчари пек. Хĕвеле курайми пултăм. Мĕнле çапла çан-çурăма пĕçертмелле-ха? Мана, пĕчĕкскере, хĕрхенмелле ĕнтĕ.

Ирех аппапа пахчана тухрăмăр. Сухансене çум-курăкран тасатас терĕмĕр. Ак каллех хĕвел хĕртме тытăнчĕ. Чăтаймарăм, тăпра муклашки илсе çÿлелле вăркăнтартăм.

– Мĕн пулчĕ санпа? – терĕ аппа ним ăнланмасăр.

– Хĕвеле çĕмĕрес тетĕп. Ăшши йăлăхтарчĕ.

– Чипер калаç! Вăл пулмасан хĕл каçмалăх пахча çимĕç те хатĕрлеймĕпĕр. Вара мĕн çисе пурăнăпăр?

– Сĕтпе çăкăр.

– Ĕне утă-улăмсăр пурăнаймасть. Выльăх апатне те ăшă çанталăкра хатĕрлемелле. Пĕр сăмахпа, эпир хĕвелсĕр пурăнаймастпăр.

– Суятăн! Эсир унта-кунта кайсан килте пĕчченех кун-кунлатăп. Нимĕнле хĕвел те кирлĕ мар мана.

Аппа сăмахĕсене урăх итлес килмерĕ. Вăрт çаврăнтăм та сад пахчинелле ыткăнтăм. Пан улми йывăççи айне тăсăлса выртрăм. Аван! Кĕçех тусăмсем вĕçтерсе çитрĕç. Урама чĕнчĕç. Турткалашмарăм. Хайхискерсем пытанмалла выляс терĕç. Пĕрене çумне кĕрсе выртрăм çеç – каялла епле сиксе тăнине ас тумарăм. Хĕвелпе хĕрнĕ тимĕре перĕннĕ эпĕ. Чунтан тарăхрăм. Хĕвеле чышкă кăтартрăм. «Сана-и?» – терĕм кÿренсе.

Тепĕр кунне те çанталăк улшăнмарĕ. Кăнтăрла иртсен çурăм тăрăх тар юха пуçларĕ. Пушмака хывса пăрахрăм та каллех сулхăна тăсăлса выртрăм. Сасартăк ура пÿрни чăтмалла мар ыратрĕ. Ялтах сиксе тăтăм. Пыл хурчĕ! Сăхрĕ ĕнтĕ. Хĕвеле каллех вăрçрăм. Вăл пулман тăк паян санталипе çÿреттĕм, пÿрнене те ыраттарман пулăттăм.



© Аня МИХАЙЛОВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ÿкерчĕкĕ.

Тинех тахçантанпах кĕтнĕ кĕркунне, унтан хĕл çитрĕ. Урра! Халĕ урамра темиçе сехет те çÿреме пултаратăп.

Юн кун çунашкана сĕтĕрсе çырманалла васкарăм. Чылай ярăннă хыççăн йăлăхрăм. Çитменнине пĕччен кичем.

Акă ман умран хĕрлĕ пĕсехеллĕ кайăк вĕçсе иртрĕ те карта çумĕнчи йывăç çине канма ларчĕ. Чим-ха! Тытас та киле илсе каяс. Ун валли пĕчĕк читлĕх тăвăпăр. Пурăнтăр ăшă çĕртре. Шăннипе хĕрлĕ ĕнтĕ вăл.

Йăмра çине хăпартăм кăна – хайхискер пăрр! вĕçсе кайрĕ. Ăна тытайманран питĕ кулянтăм. Теме пула ура шуса кайрĕ те, туратран çакланса лартăм. Турткалашрăм, тапаçлантăм – усси пулмарĕ. Халĕ катемпи пек çакăнса тăратăп. Акă алсасем хывăнса ÿкрĕç, пушмакăмсем те юр çине лачлатрĕç.

Кăштахран алăсем, унтан урасем шăнчĕç. Сăмса та хĕрелчĕ пулас. Акă сиксе чĕтреме тытăнтăм. Мĕнле-ха çырмана никам та анмасть? Çулла пулсан çынсем пăрушĕсене кăкарма килнĕ пулĕччĕç кунта. Э, хĕвел пулнă тăк – аптăрамăттăм. Вăл шăнма памастчех мана. Сăвă калама тытăнтăм. «Хĕвел пăх, хĕвел пăх! Ачу шыва кайрĕ...». Усси çук. Пыр çурăлса тухасла кăшкăрсан та никам та пулăшма килес çук. Тÿсĕмлĕх пĕтрĕ те, макăрса ятăм.

– Анне! Шăнса вилетĕп! – терĕм ĕсĕклесе.

Çапла турткалашсан-турткалашсан турат хуçăлчĕ те çĕре ÿкрĕм. Пĕр тăхтамасăр килелле вĕçтертĕм.

– Ăçтан эсĕ капла? Пушмакна ăçта хăвартăн? – тĕлĕнчĕ сĕтел хушшинче апатланакан аппа мана курсан.

Ăнлантарма вăхăт çук. Вăшт çеç кăмака çине улăхса лартăм.

Тепĕр кунне вырăн çинчен те тăраймарăм. Пÿртре ăшă пулин те мана сивĕ. Эй, айван-çке эпĕ! Çулла мĕн-ма хĕвеле кÿрентертĕм-ши? Халĕ унсăр урамра çеç мар, пÿртре те сивĕ.

Пĕрех хутчен хăçан çуркунне çитĕ-ши? Хĕвелтен каçару ыйтатăпах.

...Урамра вылятăп. Çанталăк шăрăх пулин те кăмăллă эпĕ.

– Лисук, сана пăчă мар-и? – илтетĕп тÿпери сасса.

Хĕвел! Хĕвел манпа калаçать!

– Çук паллах! Эсĕ иртнишĕн мана, тархасшăн, каçар. Ун чухне эпĕ улттăри ача айван пулнă. Халĕ пысăклантăм. Ĕнер çиччĕ тултартăм. Хĕвелĕм, эсĕ яланах çапла çутат: çулла та, хĕлле те.

– Чăн та, ăслă сăмахсемпе калаçма тытăннă эсĕ! Малтан мана чышкă кăтартма та именмерĕн. Халĕ епле маттурланнă.

Палан пек хĕрелтĕм. Тĕрĕссине калать-çке вăл.

– Лисук! Чипер юл! – терĕ те сасартăк хĕвел çухалчĕ.

Ялтах сиксе тăтăм. Тĕлĕк çеç пулчĕ иккен ку. Çапах та хăçан курăп-ши хĕвеле? Каçару ыйтасчĕ. Вара чунра та ыра пулĕччĕ.

# Çут çанталăка упрасчĕ

Аппапа лавккана кайрăмăр. Вăл мана кăмăллăх пĕремĕк, сушка тата канфет туянса пачĕ. Каялла таврăннă чухне Хĕветле инкесен умне çитсен чăтаймарăм, аппаран канфет ыйтса илтĕм. Хутне сÿрĕм те çилпе вĕçтерсе ятăм. Аппа çакна курсан:

– Ăна чупса кайса ил те кĕсйÿне чиксе хур. Килте лаç кăмакине пăрахăн, – терĕ лăпкăн çеç.

Кун пек калани йăлтах тĕлĕнтерчĕ. Çав хут таткишĕн темиçе утăм ытлашши утмастăпах.

– Сана кирлĕ пулсан пĕшкĕн те ил! – терĕм сасартăках хĕремесленсе.

Ĕненетĕр е çук эпĕ мĕн каланине итлерĕ вăл. Чи интересли вара – киле çитиччен пĕри те пĕр сăмах калаçмарăмăр. Хапха умне çитсен лимонад кĕленчи çине чул пăрахрăм, савăт самантрах чăл-пар саланчĕ.

– Эсĕ çапла пуçтахланма та пултаратăн-и тата? – терĕ аппа çаплах сассине хăпартмасăр.

Пĕр сăмах чĕнмесĕр пÿрте чупса кĕтĕм. Курткăна хывса урайне пăрахрăм та сĕтел хушшине вырнаçрăм.

– Сана хăçан тирпейлĕхе вĕрентсе çитерĕпĕр-ши? – терĕ аппа алăка уçнă-уçман.

Анне пĕçернĕ чăх яшкине юратса çирĕм. Какайĕ тата епле тутлă!

– Лисук, манпа урай сĕретĕн е асаннепе пахча тасатма тухатăн? – пырса ларчĕ юнашар аппа.

Мĕнле чее вăл! Хăй вырăнне мана ĕçлеттересшĕн. Пÿртре пăчăхса тăрăшиччен урама тухатăп. Çитменнине унта уçă сывлăш. Çапла паçăр пÿрте мĕнле васкаса кĕтĕм, çаван пекех асанне патне вирхĕнсе тухрăм.

Тĕнче! Пахчара мĕн кăна çук! Консерв банки, çĕтĕк калуш, кĕленче ванчăкĕсем, тем тĕрлĕ турат...

– Урамри пĕтĕм çÿп-çап шывпа пирĕн пахчана юхса кĕрет. Хуçалăхри тем те пĕре çапла кил умне тăкмалла мар та çав, – терĕ асанне картишрен кĕреçепе шăпăр илсе тухнă май.

Тĕрлĕ ăптăр-каптăра тарла-тарла пуçтаратăп. Çав вăхăтрах урама çÿп-çап тухса пăрахакансене ниçта кайса кĕрейми вăрçатăп. Вĕсене пула халь кунта тинке тухиччен вăй хумалла. Эх, аппапа урай сĕрмех юлмаллаччĕ.

– Мăнукăм, кăшт канар-ха. Тăрăнса аниччененех ĕçлер мар тата, – асăрхаттарчĕ асанне.

Ку сăмахсене тахçанах кĕтрĕм эпĕ унран! Каннă хушăра юлташсемпе кăштах та пулин выляса илес шухăшпа урама сирпĕнсе тухрăм. Пура çумĕнчен иртнĕ чухне ура тÿсмелле мар ыратса кайрĕ те çари! çухăрса ятăм. Паçăр хам çапса çĕмĕрнĕ кĕленче ванчăкĕ çине пуснă иккен эпĕ.

Уксахла-уксахла çав ванчăксене пуçтартăм та çырмана антăм. Пĕр пысăк йывăç çумне ним шухăшламасăрах пăрахрăм. Чим, кунта кам-тăр пăру кăкарма анĕ те урине хамашкал кастарĕ. Е пăрушши ăна курăкпа пĕрле çăтса ярĕ. Каялла пуçтартăм та çĕр чавса чиксе хутăм.

– Капла никама та сиен кÿрес çук, – терĕм кăмăллăн.

Ырă ĕç тунăшăн питĕ хĕпĕртерĕм, кĕсьерен канфет кăлартăм та хуппине сÿсе çĕре пăрахрăм. Сасартăк такам йĕппе чикнĕн шарт сикрĕм. Ара, капла хăтланса каллех аппана тĕлĕнтеретĕп-çке. Хута илес тесе пĕшкĕнтĕм çеç, таçтан çил тухрĕ те ăна самантрах вĕçтерсе таçта çитиех кайса пăрахрĕ. Чупса çитрĕм çав вырăна, çут çанталăк хитре мар кăтартакан япалана илсе кĕсьене чиксе хутăм та асанне патне васкарăм.

...Аппапа Канаша пасара кайрăмăр. Хамăра кирлĕ япаласене туянсан вокзала çул тытрăмăр. Унта çитсен аппа билет илме кĕчĕ, эпĕ тулти сак çине кайса лартăм. Сасартăк чуна ыраттармалла ÿкерчĕк куртăм. Пĕр ар çын, çÿçне тем вăрăмăш ÿстерсе янăскер, кăмăллăн çеç хĕвел çаврăнăш çисе тăрать. Хуппине, паллах, урайне пăрахать. Чăтаймарăм, ун патне чупса пытăм.

– Пичче, мĕншĕн çÿплетĕр кунта? Сирĕн хыççăн кам пуçтарать? – терĕм тарăхса.

Ман çине кăн! пăхрĕ хайхискер. Вара пĕшкĕнчĕ те:

– Кун пек ăслă калаçма камран вĕрентĕн? – кăсăкланчĕ куçран шăтарасла пăхса.

– Асаннепе аннерен тата аппаран.

Каçхи тăватă сехетре пурте сĕтел хушшине лартăмăр. Ăнсăртран чавсапа чашăка лектертĕм те яшка сĕтел çине тăкăнчĕ. Чупса кайса çĕтĕк илтĕм те çав вырăна шăлса типĕтрĕм.



© Ксюша КОШЕЛЕВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ÿкерчĕкĕ.

– Йăмăкăм, мĕнле маттурланнă эсĕ? – терĕ аппа ман çине пăхса.

Малашне тата йăрăрах пулăп-ха. Урама çÿп-çап тухса тăкакансене те çын ĕçне хисеплеме вĕрентес ĕмĕтĕм пур-ха.

– Çут çанталăка упрамалла, – терĕм тин çеç пиçсе тухнă çăкăра чăмланă май.

Тантăш
28 №, 2014, утă, 10



**Николай НОСОВ**

# Миша пăтти



Аннепе дачăра пурăннă чухне пĕррехинче пирĕн пата Мишша тусăм хăнана килчĕ. Эпĕ ăна курсан питех те савăнтăм! Ара, темиçе кунра тунсăхласа та çитрĕм-çке! Анне те хĕпĕртерĕ.

– Эсĕ çитни питĕ вырăнлă-ха, – терĕ вăл Мишшана. – Иккĕн хавасларах та пулĕ сире. Манăн ыран хулана каймалла. Пĕр-икĕ кун хăвăр тĕллĕн пурăнаятăр пуль тесе шухăшлатăп. Мĕнлерех пек?

– Паллах! Эпир пĕчĕк мар-çке! – терĕм шантарса.

– Апат пĕçерейĕр-ши?

– Ай, апат хатĕрлесси ним те мар вăл! – аллине сулчĕ Мишша.

– Апла тăк яшка е пăтă пĕçерĕр. Пăтă янтăлама çăмăлрах вĕт.

– Темех мар! Пăтă та пĕçерĕпĕр! Унта ним йывăрри те çук! – тет Мишша хавхаланса.

– Енчен те ĕç тухмасан мĕн тăвăпăр? Эсĕ хальччен пăтă пĕçерсе курман-çке! – терĕм тусăма иккĕленсе.

– Ан пăшăрхан! Анне хатĕрленине темиçе те курнă! Выçă вилмĕпĕр ĕнтĕ! Курăн ак, чĕлхӳне çăтса ямалла тутлă пулĕ.

Анне пире валли икĕ кун çимелĕх çăкăр, чейпе ĕçме варени хăварчĕ. Ăçта мĕнле çимĕç упраннине кăтартрĕ, яшкапа пăтта мĕнле пĕçермеллине, унта мĕн ямаллине каларĕ. Анчах эпĕ нимĕн те ас туса юлмарăм. «Мишша пурне те пĕлет-çке», – тесе шухăшларăм.

Анне хулана кайрĕ. Эпир ăман чавса, вăлтасем илсе çывăхри юхан шыв хĕррине пулла кайма хатĕрленетпĕр.

– Чим-ха, хамăр пулăра ларсан апат кам пĕçерĕ? – терĕм эпĕ шухăша кайса.

– Мĕн вăл апат пĕçересси? – самантрах хуравларĕ Мишша. – Вăхăта сая яни çеç! Çăкăра çисе ярăпăр та каçхи апата пăтă хатĕрлĕпĕр. Ăна çăкăрсăр та çиме пулать.

Эпир çăкăр чĕллине варени сĕртĕмĕр те юхан шыв еннелле утрăмăр. Малтан шывра тăраниччен чăмпăлтатрăмăр, унтан хăйăр çинче хĕвелпе хĕртĕнсе выртрăмăр. Варени сĕрнĕ çăкăрпа апатланнă хыççăн тинех пулă тытма лартăмăр. Пĕр вунă ыраш пăтри çеç лекрĕ. Кунĕпе ларсан та нумай çакланмарĕ. Каç енне киле çав тери выçăхса таврăнтăмăр.

– Ну, Мишша, мĕн пĕçерсе çийĕпĕр халь? Мĕн хăвăртрах хатĕрлеме пулать, çавна янтăлăпăр. Çиес килет, чăтма çук, – тетĕп хайхискерне.

– Атя пăтă хатĕрлер. Вăл часрах пулать, – хуравларĕ «повар».

– Юрĕ.

Плита çине кастрюль лартрăмăр, кĕрпе ятăмăр.

– Нумайрах яр, чăтма çук çиес килет! – тетĕп ниçта кайса кĕрейми.

Мишша кастрюле туллиех кĕрпе тултарчĕ, унтан шыв хушрĕ.

– Шывне ытлашши ямарăн-ши? Кĕсел пулмĕ-и пирĕн пăтă? – иккĕленетĕп тата.

– Темех мар, анне яланах çапла тăвать. Эсĕ кăмакана пăхса тăр, эпĕ апатне хамах пĕçерĕп. Куншăн ан кулян.

Эпĕ кăмакана вутă пăрахатăп, Мишша пăтă пĕçернĕ пек тăвать. Кастрюль çине пăхса ларать, лешĕ хăех вĕрет-çке.

Кĕçех тавралăх та тĕттĕмленчĕ, çутă çутрăмăр. Ларатпăр хайхи пăтă пиçессе кĕтсе. Кĕтмен çĕртен кастрюль хупкăчĕ çĕкленчĕ те унтан пăтă юхма пуçларĕ.

– Мишша, мĕне пĕлтерет ку? Пăтă мĕншĕн кастрюльтен tарать? – тетĕп тĕлĕнсе.

– Ăçта? – тет тусăм ăнланмасăр.

– Пĕлместĕп çав. Кастрюльтен тухать ав, кур!

Мишша кашăкпа апата савăта каялла чышма пуçларĕ. Пур пĕрех пăтă лăпланмарĕ. Нумайланса та хăпарса пычĕ.

– Тен вăл пиçсе çитнĕ? Çавăнпа кастрюльтен тăкăнать пуль, – терĕ юлташăм ĕнсине хыçса.

Эпĕ пăтта тутанса пăхрăм. Кĕрпи хытă-ха.

– Мишша, хатĕр мар вăл! Шывĕ ăçта кайса кĕнĕ-ши тата? Кĕрпи тип-типĕ-çке!

– Пĕлместĕп. Шыв нумай ятăмăр вĕт! Кастрюлĕ шăтăк мар-ши?

Савăта пур енчен те пăхса тухрăмăр. Пĕр шăтăк та асăрхамарăмăр.

– Тен, вăл сĕвĕрĕлсе пĕтнĕ. Атя тата шыв хушар, – терĕ Мишша аптраса.

Вара «ытлашши» пăтта турилккене тултарса кастрюле шыв ятăмăр. Малалла пĕçеретпĕр. Ларсан-ларсан каллех кĕрпе савăтран тăкăнма пуçларĕ.

– Ак тамаша! Ăçта тарать-ши ку пăтă? – тарăхса калаçрĕ Мишша. Каллех кашăкпа кĕрпене турилккене иле-иле хучĕ. Тепĕр курка шыв хушрĕ.

– Куратăн-и, мĕн чухлĕ шыв кирлĕ? Эпĕ сана нумайрах ямалла тесе kаларăм вĕт! – терĕ вăл кастрюльти «апата» пăтратнă май.

Кăштахран пăтă каллех савăтран тăкăнма тытăнчĕ. Эпир нимĕн тума аптрарăмăр.

– Эсĕ кĕрпине нумай янă пуль. Вăл ӳссе пынипе кастрюль уншăн пĕчĕкленсех пырать, – терĕм юлташăма.

– Ăхă. Ытлашши ятăм пулмалла. Эсĕ: «Нумайрах яр! Питĕ çиес килет!» – темен пулсан капла пулмастчĕ ĕнтĕ! – айăплама пăхрĕ мана Мишша.

– Мĕн чухлĕ кĕрпе ямаллине пĕлместĕп-çке эп! Хăв: «Пăтă пĕçересси ним те мар», – терĕн те...

– Халех пĕçерĕпĕр. Тулĕк эс мана ан чăрмантар.

– Тархасшăн, – терĕм те айккине кайса лартăм. Мишша вара тăрсан-тăрсан пĕр савăтран «таракан» пăтта турилккене илсе хурать, вара шыв хушать. Тĕпелти сĕтел ресторанти пек турилккесемпе тулса çитсен чăтаймарăм:

– Кун пек ирхинеччен те пĕçерме пулать! Эсĕ тĕрĕс мар тăватăн пуль, – терĕм.

– Ресторанта та çавăн пек тăваççĕ – ирхине валли каçхине пĕçереççĕ, – хуравларĕ Мишша хăйне ăслă çын пек тытса.

– Ну, каларăн та! Вĕсен васкамалла мар-çке, унсăр пуçне те апачĕ нумай унта!

– Пирĕн ăçта васкамалла вара?

– Сехет çине пăх-ха, кĕçех вун иккĕ çитет. Пирĕн тахçанах апат çисе ыйха путмаллаччĕ.

– Çывăрма ĕлкĕретĕн, – çухалса каймарĕ тусăм. Вара каллех кастрюле пĕр курка шыв хушрĕ.

– Пăтта ялан сивĕ шыв хушса тăнипе пиçмест те ĕнтĕ вăл! – ăнланса илтĕм эпĕ.

– Пачах шывсăр пĕçермелле тесе шухăшлатăн-и? – ыйтрĕ вăл тĕлĕнсе.

– Çуррине пушатмалла та вара шыв ярса лартмалла.

Эпĕ кастрюле илтĕм те кĕрпен çуррине пушатрăм.

– Шыв яр-ха, Мишша, – хушрăм юлташа.

Вăл куркана илчĕ те витрене тинкерчĕ.

– Пĕр тумлам та çук, – терĕ ассăн сывласа.

– Ай-уй! Халь шыв ăсма мĕнле тухмалла? Унта тĕттĕм-çке! Пусă та курăнмасть пуль.

– Темех мар! Хамах илсе кĕретĕп!

Вăл шăрпăк илсе кĕсйине чикрĕ те витре хăлăпне вĕренпе çыхса пӳртрен тухрĕ. Унччен те пулмарĕ, Мишша пӳрте кĕрсе те тăчĕ.

– Шыву ăçта? – ыйтатăп унран.

– Шыв... Пусăра...

– Кун пирки эп хам та пĕлетĕп! Витрӳ ăçта вара?

– Витре те пусăра... – терĕ Мишша.

– Мĕншĕн? Вĕçертсе ятăн-и?

– Ăхă.

– Эх, мемме! Эс пире выçă вĕлересшĕн мар пуль те? Халĕ шыва мĕнпе ăсăпăр ĕнтĕ?

– Атя чейникпе хăтланса пăхатпăр.

Вара чейнике илтĕмĕр те:

– Вĕрен кирлĕ. Ăçта вăл? – терĕм ун-кун пăхкаласа.

– Вăл та пусăра...

– Эх, санпала!

Нимĕн те тăваймăн, урăх вĕрен тавраш шырама пикентĕмĕр. Тупаймарăмăр.

– Тен, кӳршĕрен ыйтса килмелле? – пĕлтерчĕ Мишша хăйĕн «ăслă» шухăшне.

– Ăсран тайăлтăн-им? Вĕсем тахçанах тăххăрмĕш тĕлĕк кураççĕ ĕнтĕ, – çавăнтах чартăм алăк умне пынăскере.

Çак самантра юри тенĕ пекех иксĕмĕрĕн те питĕ ĕçес килсе кайрĕ. Халĕ çакăнта сутăн шыв пулсан пĕр куркана çĕр тенкĕ парса та илнĕ пулăттăмăр!

– Яланах çапла вăл: шыв çук чухне ăш хыпать. Çавăнпа пуш хирте çынсем ялан ĕçесшĕн. Унта ниçта та шыв тупаймастăн-çке, – терĕ Мишша кирлĕ-кирлĕ мар çинчен шухăшласа.

– Тем те пĕр ан калаç-ха. Вĕрен шыра – хăть усă пулĕ.

– Ăçтан тупас-ха ăна? Пур кĕтесре те пăхрăм – ниçта та çук. Атя вăлта çиппине чейникрен çыхар, – сĕнчĕ шухăшне тусăм.

– Вăл йывăрăша чăтайĕ-ши? – ыйтрăм иккĕленсе.

– Тен, чăтайĕ те. Татăлсан – чейниксĕр тăрса юлатпăр.

– Ăна каламасăрах пĕлетĕп-ха...

Каланă – тунă. Вăлта çиппине чейникрен çыхрăмăр та пусă еннелле утрăмăр. Эпĕ савăта аялалла антарса шыв ăсса илтĕм. Çӳлелле туртма пуçларăм. Вăлта çиппи гитара хĕлĕхĕ пек туртăнса тăрать – халь халь татăлса каяс пек.

– Чейник те вĕçерĕнсе пусса каяссăн туйăнать мана, Мишша, – терĕм иккĕленсе.

– Асăрханса туртсан, тен, кăларатăн, – терĕ тантăшăм аялалла пăхса.

Чейнике майĕпен çӳлелле туртатăп. Шывран кăлартăм çеç – çип татăлса та кайрĕ.

– Эх, пулмарĕ! Халĕ мĕнпе шыв ăсатпăр? – кулянатăп эпĕ.

– Атя сăмавара илсе тухар! – самантрах хуравларĕ Мишук.

– Ан аташ-ха!

– Ну, апла тăк кастрюльпе ăсар!

– Пирĕн кастрюль лавкки мар вĕт! Пăтăпа лараканни çеç, урăх çук.

– Тен, стакана хута ярар?

– Стаканпа шыва мĕнле ăсса илĕпĕр? Пулмасть пуль унпа нимĕн те.

– Пăтта пĕçерсе пĕтермелле-çке! Ĕçес те килет – чăтма çук.

– Атя куркапа ăсар. Унпа меллĕрех пулĕ, – терĕм те эпир пӳрте кĕтĕмĕр. Куркана авринчен вăлта çиппипе çыхрăмăр та каллех пусă патне таврăнтăмăр. Пĕрер курка шыв ăсса илсен тинех ăш хыппине лăплантартăмăр.

– Яланах çапла пулать вăл. Ĕçес килнĕ чух пĕр витре шыва ним мар пушатассăн туйăнать. Чăннипе вара пĕр куркапах тăранатăн, – терĕ Мишша тутине çанни вĕçĕпе шăлса.

– Пустуй калаçса вăхăт иртгериччен пӳртрен пăтта йăтса кил-ха. Куркапа темиçе хут çӳриччен кунтах шыв тултаратпăр та вара çĕнĕрен лартса яратпăр, – терĕм эпĕ пуçра ăслă шухăш çуралнăран савăнса.

Мишша кастрюле йăтса килсе пусă хĕррине лартрĕ. Ăна асăрхамасăр чавсапа тĕксе чутах шыва ӳкермерĕм.

– Вăт мĕшĕлти! – тарăхса кайрăм эпĕ. – Мĕншĕн савăта ал айне лартрăн? Кастрюле йăт та айккинерех кайса тăр, унсăрăн пăтă та пусса кайĕ.

Шыва кирлĕ чухлĕ тултарсан киле кĕтĕмĕр. Кăмака тахçанах сӳнсе сивĕннĕ. Ăна чĕртрĕмĕр те пăтта çĕнĕрен пĕçерме лартрăмăр. Акă вăл вĕреме кĕчĕ те çăралчĕ. Вĕренĕ май хупкăчи çĕкленсе илсе пăш! пăш! пăшлатать.

– Вăт ку лайăх пăтă пулать! – тет Мишша савăнса.

Кашăк илсе апата ас тивсе пăхрăм.

– Тьху! Мĕнле пăтă ку? Йӳçĕ, тăварсăр тата çитменнине çунăк тутă калать! – тесе пит-куçа пĕркелентертĕм.

Мишша та хыпса пăхас терĕ, анчах хыпнă хыпман сурса пăрахрĕ.

– Выçă вилес пулсан та кун пек пăтта çиместĕп! – тет.

– Ку апата çисен вилсе те кайăн!

– Халь мĕн тăватпăр вара?

– Пĕлместĕп.

– Ай! Тăмсайсем эпир! Пирĕн паян тытса килнĕ ыраш пăтрисем пур-çке! – терĕ Мишша хăйне аллипе çамкинчен çатлаттарса. – Мансах кайнă!

– Пулăпа аппаланма тек вăхăт çук. Кĕçех тул çутăлать, – терĕм ăна пӳлсе.

– Эпир вĕсене пĕçерсе хăтланмастпăр, ăшаласа çиетпĕр. Ку часрах пулать.

– Ну, юрĕ. Хăвăрт пиçет тĕк хатĕрлер апла.

Мишша пулла тасатрĕ те çатмана хучĕ. Савăт хĕрсе çитсен ыраш пăтрисем тĕпне çыпăçса ларчĕç. Тусăм вĕсене çĕçĕпе хăйпăтма пикенчĕ. Пулă лăсканса-ванса пĕтрĕ.

– Ну, ăслă та эс! – терĕм йĕкĕлтесе. – Унта тип çу ямаллаччĕ малтан!

Мишша çатмана çу ячĕ те пулă часрах ăшалантăр тесе ăна кăмакари вĕри кăмрăк çинех лартрĕ. Кĕтмен çĕртен çу чашлатма-çатлатма пуçларĕ, унтан çатмана вут хыпса илчĕ. Мишша ăна кăмакаран туртса кăларса айккине лартрĕ. Çатмари çу çаплипех ялкăшса çунать. Ăна сӳнтерме пирĕн пĕр тумлам шыв та çук килте. Çунса пĕтиччен кĕтсе тăма тиврĕ. Пӳлĕм тĕтĕм шăршипе тулчĕ, сывлама çук. Пирĕн «каçхи апат» та хура кăмрăка çаврăнчĕ.

– Ну, тата мĕн ăшаламалли пур кунта? – терĕ алă усма пĕлмен Мишша.

– Урăх нимĕн те ăшалама памастăп! Çимĕçе кăна сая яратăн эс. Пушар та тухма пултарать.

Мишша тек нимĕн те янтăлама хăтланмарĕ. Хырăмсем чăтма çук выçнăран хутаçри кĕрпене те чăмласа пăхрăмăр. Тутлă мар! Чĕрĕ сухан ас тиврĕмĕр – йӳçĕ! Çăкăрсăр çу та хыпрăмăр – ăш пăтранать. Варени савăтне тупрăмăр та ун юлашкисене çуласа çисе ятăмăр. Вара тин çывăрма выртрăмăр.

Тепĕр кунне ыйхăран вăрансанах каллех хырăм выççи кастарнине туйса илтĕмĕр. Мишша çӳлĕк çинчен кĕрпе илчĕ те пăтă пĕçерме шухăшларĕ. Çакна курсан эпĕ тӳрех хирĕçлерĕм.

– Э-э, çук! Кун пирки эсĕ тек ан та шутла! – терĕм хăраса ӳксе. – Часах кӳршĕри Наташа аппана чĕнсе килетĕп те пăтă пĕçерсе пама ыйтатăп.

Эпир кӳрше таплаттартăмăр. Наташа аппана тĕпĕ-йĕрĕпех каçхине мĕн пулса иртнине каласа кăтартрăмăр. Пăтă пĕçерсе çитернĕшĕн ăна пахчари йăрансене çумлама пулăшатпăр тесе сăмах патăмăр. Ырă кăмăллăскер пире хĕрхенчĕ пулас – сĕт ĕçтерчĕ, купăста кукăлĕпе хăналарĕ те ирхи апат çиме сĕтел хушшине лартрĕ. Эпир, тем пек выçăхнăскерсем, пĕр чарăнми чăмларăмăр.

Çисе тăрансан аппаран вĕрен ыйтса илтĕмĕр те пусăри витрепе чейнике кăларма кайрăмăр. Нумай вăхăт тăрмашрăмăр унта. Кайран вара Мишша вĕрен вĕçне пралукран авса тунă çекĕле çыхса хума шут тытрĕ. Тинех шыври савăтсене туртса кăлартăмăр. Унтан кӳрше çум çумлама кайрăмăр.

– Çум çумласси вăл темех мар! Пăтă пĕçерессинчен чылай çăмăлрах-çке! – терĕ йăран хушшине пĕшкĕннĕ Мишша аллине сулса.

***Вырăсларан Нина ЦАРЫГИНА куçарнă.***

# Арктикӑрисем

**Кунта яланах шап-шурӑ юр выртать. Тинӗс те тем хулӑнӑш пӑр айӗнче. Ҫанталӑк нихӑҫан та вунӑ градус сивӗрен ытла ӑшӑтмасть. Апла пулсан та, сивӗсене пӑхмасӑрах ҫак тӑрӑхра та чӗр чунсем пурӑнаҫҫӗ. Вӗсем ҫулленхи хӗл кунӗсене тахҫанах хӑнӑхнӑ. Пингвинсен, сӑмахран, тӗкӗ айӗнче хулӑн мамӑк, шурӑ упасен те тирӗ хулӑн, шывпа йӗпенмест. Кунти чӗр чунсен пурин те ӳчӗ шартламана чӑтса ирттерме пулӑшакан хулӑн ҫу сийӗпе витӗннӗ. Ҫак материкӑн шалти пайӗнче нимӗн те пурӑнмасть, тинӗс хӗрринче ҫеҫ чӗр чунсем пур. Кӑштах вӗсем ҫинчен те вуласа пӗлер.**



## Шурӑ упа

Кӗркунне вӗҫӗнче шур упа ами ҫурисем валли юр ӑшӗнче шӑтӑк чавса хатӗрлет. Раштав-кӑрлач уйӑхӗсенче вара ҫурасем ҫут тӗнчене килеҫҫӗ. Малтанлӑха пачах та ирӗке тухмаҫҫӗ вӗсем. Ара, пӗчӗккисем суккӑр ҫуралаҫҫӗ-ҫке. Ҫитменнине хӑлхисем те илтмеҫҫӗ. Икӗ ҫултан тин тухаҫҫӗ тӗрекленнӗскерсем.

Шурӑ упасем юр ҫине выртсан пачах курӑнми пулаҫҫӗ, ҫапла вӗсем ҫӑткӑнсенчен пытанаҫҫӗ. Ҫак чӗр чунсем шывра та лайӑх ишеҫҫӗ. Ӳссе ҫитӗннӗ упасем 100-150 килограмм тайма пултараҫҫӗ. Вӗсем тӗнчери пысӑк ҫӑткӑн чӗр чунсен йышне кӗреҫҫӗ.

## Ласт ураллисем

Вӗҫӗ-хӗррисӗр сарӑлса выртакан юрлӑ-пӑрлӑ Арктикӑра ласт ураллӑ тӗрлӗ чӗр чун пурӑнать. Вӗсен йышне тинӗс котикӗсем, тинӗс слонӗсем, тинӗс леопарчӗсем, тюленьсем тата моржсем кӗреҫҫӗ. Ҫак чӗр чунсен урисем ласт евӗр, ҫавӑнпа та чылай вӑхӑта вӗсем шывра ишсе ирттереҫҫӗ. Ҫӗр ҫине тухсан вара хырӑмӗпе шуса куҫаҫҫӗ, утаймаҫҫӗ. Ласт ураллисем пысӑк сӑмса шӑтӑкӗ пуррипе палӑраҫҫӗ – ку вӗсене шыв айӗнче нумайрах тытӑнса тӑмашкӑн, ытларах сывлӑш сывласа илме кирлӗ. Шывра нумай вӑхӑт ирттерекенскерсем пулӑпа, ракпа тата моллюсксемпе апатланса пурӑнаҫҫӗ.



## Пингвин

Пингвин кайӑксен шутне кӗрет. Анчах та унӑн кӗске ҫуначӗсем вӗҫме май памаҫҫӗ. Шывра ишме ҫеҫ лайӑх пулӑшаҫҫӗ, вӗсен ҫуначӗсем пулӑсенни пекех. Ҫак кайӑксем Антарктидӑн кӑнтӑр полюсӗнче, ушкӑнӑн-ушкӑнӑн пухӑнса пурӑнаҫҫӗ. Тин ҫеҫ ҫуралнӑ пингвин чӗпписен тӗкӗ хура-хӑмӑр тӗслӗ, кайран вӑл ыттисенни пекех улшӑнать.

Пӗр ушкӑна (кӗтӗве) пурӗ 300 кайӑка яхӑн та пухӑнма пултарать.

## Морж



Ҫак вӑрӑм шӑллӑ чӗр чун пӑрлӑ тинӗссенче пурӑнать. Морж аҫи питӗ пысӑк, йывӑрӑшӗ пин те пилӗк ҫӗр килограма яхӑн, ами вара пин килограма та ҫитеймест.

Моржӑн вӑйлӑ сасси арӑсланпа вӑкӑр пӗрле мӗкӗрнине аса илтерет. Пӑр ҫинче канлӗн ҫывӑрнӑ чухне те вӑл харлаттарать. Нумайччен ҫурҫӗр хӗвелӗпе хӗртӗнсе выртма юратаканскер хӑйне чӑрмантарнине чӑтма пултараймасть, ҫийӗнчех тулхӑрса каять.

Малти вӑрӑм шӑлӗсем ӑна ҫӑткӑнсенчен хӳтӗленме, тинӗс тӗпне шӑтарма тата пӑртан ҫакланса шуса ҫӳреме пулӑшаҫҫӗ. Хӑшӗ-пӗрин шӑлӗ пӗр метра яхӑн ӳсет. Ӳчӗ айӗнчи хулӑн ҫу сийӗ вара моржа сивӗрен те сыхлать, выҫӑхма та памасть.

# Африкӑрисем

**Ҫӗр-шывӑн чи шӑрӑх кӗтесӗнчен пӗринче – Африкӑра – тӗлӗнтермӗш чӗр чун нумай. Вӗсенчен чылайӑшӗ саваннӑра е сайра вӑрмансенче пурӑнать. Унта буйвол, носорог, слон, гепард, газель кӗрет. Пуш хирте вара шакалсем, тимӗр шапасем, вилепе тӑранса пурӑнакан гиенӑсем тата ыттисем те тӗл пулаҫҫӗ. Экватор тӑрӑхӗнчи вӑрмансенче упӑтесем, бегемотсем, крокодилсем пурӑнаҫҫӗ. Атьӑр-ха вӗсенчен хӑшӗ-пӗринпе паллашар.**

## Африка слонӗ



Ку чӗр чун пирӗн планета ҫинчи чӗр чунсенчен чи пысӑкки шутланать. Вӗсем ҫӗр ҫинче икӗ миллион ҫул ытларах пурӑнни паллӑ. Ҫитӗннӗ слонсен йывӑрӑшӗ – ҫичӗ-сакӑр тонна, ҫӳллӗшӗ – тӑватӑ метр ытла. Африка слонӗсем ытларах саваннӑра, вӑрмансенче, шурлӑхлӑ вырӑнсенче пурӑнаҫҫӗ. Ҫавӑнпа ҫын куҫӗ умне сайра курӑнаҫҫӗ. Ытларах вуннӑн-вун иккӗн пуҫтарӑнса ҫӳреҫҫӗ, сайра хутра пӗчченшер те тӗл пулаҫҫӗ. Ушкӑна чи ватӑ слон ертсе ҫӳрет. Слонсем лӑпкӑ, туслӑ, пӗр-пӗрин харкашмаҫҫӗ, ҫапӑҫмаҫҫӗ. Ушкӑнра пӗр-пӗрин ҫурисене пӑхма пулӑшаҫҫӗ. Пӗчӗкскерсем амӑшӗпе пилӗк ҫул пурӑннӑ хыҫҫӑн ҫеҫ хӑйсем тӗллӗн ҫӳреме пуҫлаҫҫӗ. Ҫамрӑк слонсен ушкӑнӗ пӗр вырӑнта нумай вӑхӑт чарӑнса тӑмасть, куҫса ҫӳрет. Унсӑрӑн вӗсене арӑслансем йӗрлесе тупса тапӑнма пултараҫҫӗ.

Слонсем курӑкпа, йывӑҫ турачӗсемпе-ҫулҫисемпе, ҫамрӑк хунавсемпе, тӗмсемпе апатланаҫҫӗ. Пӗр слон кунне ҫӗр килограмм йывӑҫ-курӑк ҫисе яма пултарать. Вӗсем вӑтамран утмӑл-ҫитмӗл ҫул пурӑнаҫҫӗ. Африка слонӗсене ҫынсем хальччен пӗрне те алла хӑнӑхтарайман-ха. Вӗсем, Инди слонӗсемпе танлаштарсан, дрессировкӑсене пачах та пӑхӑнмаҫҫӗ.

## Гепард

Гепард – ҫӑткӑн чӗр чунсен шутне кӗрет. Унӑн ячӗ Латин чӗлхинчен куҫарсан «кушак тата леопард» тенине пӗлтерет. Вӑл питӗ хӑвӑрт чупма пултарать. Ҫавӑнпа та ҫитӗннӗ гепардӑн йывӑрӑшӗ 40-65 килограмм ҫеҫ. Вӑрӑмӑшӗ вара пӗр метра яхӑн. Хӳри – 80 сантиметр.

Кушаксен йӑхне кӗрекен гепардӑн ҫак йӑхри ытти чӗр чунпа танлаштарсан ӳт-пӗвӗ кӗскерех, урисем вӑрӑм та ҫинҫе, пуҫӗ пысӑках мар, куҫӗсем ҫӳлерех вырнаҫнӑ, хӑлхисем пӗчӗк те ҫаврака тӑрӑллӑ. Вӑрӑм хӳри яланах ҫӗртен сӗтӗрӗнет, гепард унпа чупнӑ чухне руль пекех усӑ курать. Тирӗ унӑн сайра ӳсекен ҫӑмпа витӗннӗ, сарӑ хӑйӑр тӗслӗрех, хырӑмӗсӗр пуҫне пур ҫӗрте те хура пӑнчӑсем пур, икӗ айккинче те пӗрер хура йӑрӑм.

Гепард кушак пекех мяуклатма, мӑрлатма тата чашкӑрма пӗлет. Вӑл ытларах тӑмлӑ вырӑнсенче, сайра хутра пуш хирте тӗл пулать.

Гепард шултӑра чӗр чунсемпе, хӑш чухне мулкачсемпе апатланать. Малтан суйланӑ чӗр чун патне йӑпшӑнса пырать те кайран питӗ васкавлӑн чупса хӑваласа ҫитет. Сехетне 110 километра ҫити хӑвӑртлӑхпа чупма пултарать. Ҫавӑнпа та хӑй куҫ хывнӑ чӗр чуна пӗр минутрах хуса ҫитет. Ҫитӗннӗ гепард пӗр газель какайӗпе икӗ-виҫӗ кун апатланать.

Гепардсен йышӗ чакса пынипе вӗсене Хӗрлӗ Кӗнекене кӗртнӗ.



*Нина ЦАРЫГИНА (тел. 56-11-80) хатӗрленӗ.*